Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

1953 çул Май 6 юнкун № 89 (8998)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Паянхи номерте:

ÇУРАКИНЕ ХĂВĂРТ ТАТА ПЫСĂК ПАХАЛĂХПА ИРТТЕРЕССИШĔН СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТĂВА ВĂЙЛАТСА ПЫРАР! П. Смирнов, С. Федотов, П. Тихонов.—Агротехникăна пăснине хирĕç кĕрешмелле (1 стр.).

ЫРАН — РАДИО КУНĔ. З. Топуриа.—Коммунизмла воспитани памалли хăватлă хатĕр. Н. Леонидов.—Колхозлă ялта радио калаçать. В. Тонышев.—Радио пурнăç йăлине кĕчĕ (2 стр.).

ФЕЛЬЕТОН: И. Кузьмин.—Куçа курăнман клуб (2 стр.).

ЭКЗАМЕНА ХАТĔРЛЕНЕССИ—ШКУЛ ПУРНАÇĔНЧИ ОТВЕТЛĂ ТАПХĂР. П. Николаев.—Тăваттăмĕш класра вĕренекенсемпе ĕçлесси. И. Нарышкин.—Пирĕн шкул экзаменсем умĕнхи вăхăтра. Ф. Иванов.—Историпе СССР Конституцине вĕрентекенсен тивĕçĕ (3 стр.).

Тунисри лару-тăру (4 стр.).

Францири муниципалитетсен иккĕмĕш суйлавĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Корейăра тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илес пирки (4 стр.)

Н. Петров. — «Зойăпа Шура çинчен» (4 стр.).

Радиофикаци ĕçне малалла вăйлатассишĕн

Майăн 7-мĕшĕнче совет халăхĕ вырăс наукипе пĕтĕм тĕнче науки историйĕнчи чи паллă кунсенчен пĕрне—вырăссен аслă ученăйĕ Александр Степанович Попов радио шутласа кăларнăранпа 58 çул çитнине паллă тăвать.

Пирĕн çĕршывра радио аталанни этемлĕх генийĕсен—Ленинпа Сталинăн ячĕсемпе уйрăлми тачă çыхăнса тăрать. Ленинпа Сталин радио малалла вăйлăн аталанса пырассине чунтан ĕненнĕ, радиотехника вăйланса пынине тимлĕ сăнаса тăнă, радиопромышленность, радиоçыхăну тата радиовещани аталанăвĕшĕн ялан тăрăшнă. 1922 çулхи майăн 19-мĕшĕнче Иосиф Виссарионович Сталин патне янă çырура Владимир Ильич Ленин çапла çырнă:

«...пирĕн техникăра этемĕн чĕрĕ сăмахне пралуксăр радио тăрăх инçете пама пулать; çавăн пекех нумай çĕршер приемниксене ĕçе яма пулать, вĕсем Мускавра калакан сăмахсене, докладсене тата лекцисене республика тăрăх Мускавран çĕршер çухрăма, вăхăт çитсен вара пиншер çухрăма та пама пултарĕччĕç», тенĕ. Çак плана пурнăçлас ĕçе В. И. Ленин питех те пысăк вырăна хунă.

Ленин радиона: хутсăр хаçат, тесе каланă. Радио пулăшнипе, Мускавра вулакан хаçата Пĕтĕм Россия итлĕ, тенĕ вăл.

Совет Союзĕнче радио енĕпе калама çук пысăк çитĕнӳсем тунă. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе Совет Союзĕ—радио пуçланса кайнă çĕршыв—радиотехника чи хăватлă аталаннă çĕршыв пулса тăчĕ.

Пирĕн çĕршывра хăватлă радиостанцисем нумай ӳссе ларчĕç. Халĕ ĕнтĕ Мускав сассине—çирĕп миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешме чĕнекен сасса миллионшар тата вуншар миллион çынсем итлессĕ.

Çĕршыва радиофикацилес тĕлĕшпе пуçланса кайнă ĕçсем çав тери анлă сарăлчĕç. Пирĕн çĕршывра чи лайăх та хăватлă радиопромышленность туса хунă. Совет ученăйĕсем радиотехникăна малалла аталантарас, радиопа пур ĕçре те усă курмалла тăвас тĕлĕшпе çĕнĕ открытисем тăвассĕ.

Çĕршывăн идейăлла пурнăçĕнче радио калама çук пысăк вырăн йышăнаса тăрать. Пирĕн çĕршывра радиовещани идеологилле ĕçĕн, массăсене культурăлла тата политикăлла воспитани парас ĕçĕн хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăрать. Радио совет халăхĕн йăлине кĕчĕ.

Радио енĕпе тунă çитĕнӳсем Чăваш республики пурнăçĕнче те лайăх курăнассĕ. Халĕ пирĕн республикăра 92 радиоузел ĕçлет. Çак узелсенче пурĕ 42 пин радиоточка шутланать. Кунсăр пуçне республикăра 8 пин те 500 радиоприемник пур. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра çĕнĕрен 49 радиоузел тунă, 22.055 радиоточка хушăннă. Радиофикаци ĕçĕ Улатăр, Сĕнтĕр, Комсомольски, Муркаш, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенче ăнăçлă пырать. Комсомольски, Муркаш, Çĕрпӳ тата Шăхасан районĕсенче колхозсене радио кĕртес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем Мускавран паракан передачăсене итленипе пĕрлех тата вырăнти радиостанци тăрăх политинформацисем, калаçусем, лекцисем, докладсем, литературăпа музыка передачисем, ача-пăча передачисем итлессĕ.

Радио ĕçне юратакансен çитĕнĕвĕ те пысăк. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра 280 радиокружок пур, вĕсем 3 пин те 800 çынна пĕрлештерсе тăрассĕ. Иртнĕ çулта вĕсем колхозниксен килĕсене детекторлă тата лампăллă 2 пин те 400 радиоприемник лартса панă. Ялсенчи чи лайăх радиокружоксенчен пĕрин—Муркаш районĕнчи Тойкилтĕри 7 çул вĕренмелли шкул çумĕнчи радиокружокăн членĕсем детекторлă тата лампăллă 300 радиоприемник тунă. Радист-операторсем радиоспортăн Чăваш республикинчи пур рекорчĕсене те лайăхлатрĕç.

Эпир радио енĕпе тунă çитĕнӳсем пысăк. Анчах пирĕн çакна манма кирлĕ мар: радиофикаципе вырăнти радиовещани енĕпе тата радио ĕçне юратакансен юхăмне малалла сарас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха.

Чăваш республикинче радиофикаци ĕçĕ çав-çавах çителĕксĕр пулса пырать. Хальхи вăхăтра ĕçлекен радиоузелсенчен республикăри мĕнпур колхозсен 20 процентне кăна радио кĕртнĕ. 1952 çулта радиофикаци планне 79,2 процент çеç тултарнă. Радиофикаци ĕçĕ Калинино, Советски, Первомайски, Вăрнар районĕсенче уйрăмах начар пырать. Йĕпреç, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Пăрачкав, Шăмăршă тата Елчĕк районĕсенче колхозсен укçа-тенкипе радио кĕртмелли плана пачах пурнăçламан. Çыхăну органĕсем колхозсенчи радиоузелсене начар пулăшассĕ. Правительство радиофикаци ĕçне туса пыма Çыхăну министерствин органĕсене хушнă, анчах та вĕсем хăйсене шанса панă ĕçшĕн халĕ те ответлăха кирлĕ пек туймассĕ. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем радиофикаци ыйтăвĕпе çулсеренех решенисем йышăнассĕ, анчах та çав решенисем çинчен кайран манассĕ.

Радиофикаци енĕпе кăçал пысăк та ответлă задачăсем тăрассĕ: çулталăк хушшинче 9.000 радиоточка, вăл шутра ялсенче 5.000 радиоточка, кĕртмелле. Çыхăну управленин, районсенчи çыхăну кантурĕсен тата мĕнпур çыхăну работникĕсен хăйсен ĕçне халех лайăхлатса, республикăн радиофикаци планне пĕр сăмахсăрăх пурнăçламалла. Партипе совет органĕсен вырăнсенче радиофикаци ĕçне хăйсен чи çывăх ĕçĕ тесе шутламалла, çыхăну органĕсен ĕçне тĕрĕслесе тămалла, вĕсене кирлĕ пулăшу памалла, радиофикаци планне, уйрăмах ялсене радиофикацилемелли плана, пурнăçлас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

«Правда» хаçатра 1953 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче пичетленсе тухнă статьяра радиовещани ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса панăччĕ. Çавăнта кăтартса панисем Чăваш республикинчи радиовещание пĕтĕмĕшпех тивессĕ. Чăваш республикинчи радиоинформаци комитечĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Радиопередачăсен идейăлла-политикăлла шайĕ çителĕксĕр-ха, вĕсем халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтереймессĕ. Радиопередачăсенче И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене çителĕксĕр пропагандăлассĕ. Радиопередачăсенче республика пурнăçне çителĕксĕр çутатса парассĕ. Хăшпĕр чухне радиопередачăсем республика умĕнче тăракан хуçалăхла тата политикăлла задачăсемпе çыхăнса тămассĕ. Социализмла промышленность ыйтăвĕсене, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн пыракан кĕрешĕве начар çутатса парассĕ, промышленносри новаторсен ĕç опытне, вĕсен ĕç меслечĕсене ыттисем хушшине çителĕксĕр сарса пырассĕ.

Вырăнти радиопередачăсенче ялхуçалăхĕн тĕп задачине—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне, çакăнпа пĕр вăхăтрах унăн тухăçлăхне ӳстерес, çĕрĕçпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн таварлă продукцине ӳстерес задачăна начар пропагандăлассĕ. Культура строительстви ыйтăвĕсене уйрăмах начар çутатса пырассĕ. Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци представителĕсем микрофон умĕнче сахал тухса калассĕ. Радио тăрăх час-часах идейăпа художество тĕлĕшĕнчен пиçсе çитмен произведенисем парассĕ. Чăваш республикинчи радиоинформаци комитечĕн вырăнти вещание лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пирĕн республикăра радио ĕçне юратакансен юхăмĕ халĕ те массăллăн сарăлса кайман-ха. Досааф-ăн пуçламăш организацийĕсенчен нумайăшĕ çак юхăма сарас тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлессĕ. Досааф-ăн республикăри, хуласемпе районсенчи тата пуçламăш организацийĕсен радио ĕçне юратакансен юхăмне анлăн сарса пымалла.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви радио ĕçне малалла аталантарас тĕлĕшпе куллен тăрăшассĕ. ССР Союзне аталантармалли çĕнĕ пилĕк çуллăх планра радиофикацин анлă программине палăртса хунă. Радиофикаци ĕçне пур майсемпе те хăвăртлатасси, радиопередачăсен пахалăхне лайăхлатасси парти организацийĕсен чыслă тивĕçĕ пулса тăрать.

Коммунизмла пичет куние Шупашкарта уявлани

Ĕнер Шупашкар хулинчи парти, совет, профсоюз тата комсомол активĕпе пĕрле пичет работникĕсен савăнăçлă пухăвĕ пулчĕ. Унта «Майăн 5-мĕшĕ—Коммунизмла пичет кунĕ» çинчен «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ С. В. Карташов юлташ доклад турĕ.

Доклад хыççăн 1-мĕш номерлĕ типографири тата пир-авăр фабрикинчи рабочисен художествăлла пултарулăх кружокĕсем концерт парчĕç.

СТЕНА ХАÇАТ РЕДАКТОРĔСЕМПЕ КОРРЕСПОНДЕНТСЕН ПУХĂВĔ

КУКЕÇ. Стена хаçат редакторĕсемпе корреспондентсен районти пухăвĕнче районти хаçат редакторĕ Я. Никитин юлташ стена хаçачĕсемпе корреспондентсен çураки вăхăтĕнчи задачисем çинчен доклад туса панă.

Доклад хыççăн корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсем—Ядриццев, Илларионов, Григорьев тата ытти юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем районти «Ленин çулĕпе» хаçат критикăлла статьясем сахал пичетлени, корреспондентсемпе семинарсем ирттермени çинчен каларĕç.

Çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн социализмла ăмăртăва вăйлатса пырар!

Трактористсем нормăна ирттерсе тултарассĕ

ПĂРАЧКАВ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти М. Горький ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕсенче механизаторсем пысăк хастарлăхпа ĕçлессĕ. И. Кормилицинпа Ф. Николаев трактористсем хăйсен агрегачĕпе çурхи тырăсем акма куллен 106-шар гектар çĕр хатĕрлесе парассĕ. «ДТ-54» тракторпа ĕçлесе, вĕсем виçĕ талăк хушшинче 306 гектар çĕртме сухине культиваци тунă, сменăри нормăна кашниех 150-шар процент тултарнă.

Культиваци тунă хыççăнах акса пырассĕ. Трактор сеялкипе акнисĕр пуçне, колхоз хăйĕн сеялкисемпе те акать.

Н. КОНОВАЛОВ,
МТС главнăй агрономĕ.

ЕЛЧĔК, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС механизаторĕсем хăватлă çĕнĕ техника вăйĕпе çураки ĕçĕсенче туллин усă курассишĕн тăрăшассĕ. 9-мĕш трактор бригадинчи трактористсем Пушкин ячĕпе тăракан колхозра 315 гектар тырă акрĕç. З. Анисимов тракторист, «СТЗ-НАТИ» тракторпа сменăри нормăна куллен 115—120 процент тултарса, 167 гектар тырă акрĕ. «ДТ-54» трактортан виçĕ культиватор кăкарса тунă агрегатпа ĕçлекен Соловьев юлташ куллен 70 гектар культиваци тăвать, смена нормине 110—115 процент тултарать.

Ленин ячĕпе тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлекен пĕрремĕш трактор бригадинчи В. Черновпа Г. Карамаликов трактористсем иртнĕ виç-тăватă кун хушшинче 257 гектар тырă акнă.

Н. ГРИШИН,
МТС директорĕ.

ÇĔРПӲ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Т. Степанов юлташ ертсе пыракан трактор бригади çуракине апрелĕн 24-мĕшĕнче тухрĕ. Трактористсем «Сталинцы» тата «Красный Октябрь» колхозсенче 250 гектар культиваци туса тырă акрĕç, выльăх апачĕ валли курăк акма 45 гектар сухаларĕç. 33 гектар нумай çул ӳсекен курăксем акрĕç.

Бригадăра социализмла ăмăрту анлăн сарăлса пырать. «ДТ-54» тракторпа ĕçлекен М. Петров тракторист сменăра 7 гектар сухалас вырăнне, яланах 8—9 гектар сухалать. «ДТ-35» тракторпа ĕçлекен В. Тимофеев тракторист хăйĕн сменинче нормăна 120—135 процент тултарать.

Ф. Семенов, В. Димитриев, М. Степанов юлташсем культиваци тунă çĕрте нормăна 110—120 процент тултарассĕ.

Бригадăра ăмăрту мĕнле пыни çинчен «боевой листок» çине çырассĕ. Трактористсем çуракинчи ĕçсене планпа пăхнинчен икĕ кун маларах пурнăçлассишĕн тăрăшассĕ.

С. ШАДИН.

КАНАШ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ăн 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Н. Буржуев юлташ) 4 тракторпа Хрущев ячĕпе тăракан, «Комсомолия» тата «Канаш» колхозсенче çураки тăвать. Механизаторсем тракторсемпе туллин усă курса пысăк тухăçлăхпа ĕçлессĕ.

Н. Башмаков тракторист «ДТ-54» тракторпа сменăра 9 гектар, А. Мусьтяков тракторист «СТЗ-НАТИ» тракторпа—8,5 гектар сухалассĕ. Бригада паянхи куна 250 гектар сухаланă. **Г. ВАСИЛЬЕВ.**

Çĕрулмине яровизацилеме хучĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Яровизацилесе лартсан çĕрулми чылай тухăçлăрах пулать. «Молния» колхозра 40 тонна çĕрулмине яровизацилеме хучĕç. Колхоз кăçал 30 гектар çине çĕрулмине çĕнĕ майпа—тăваткал кĕтеслĕн лартма палăртнă. Иртнĕ çулта тăваткал кĕтеслĕ майпа лартнă çĕрулми тухăçлăхĕ, яланхи пек касăпа пăрахса тунинчен, икĕ хут ытларах пулнă.

П. ГЕРАСИМОВ.

ЯЛКОРСЕН РЕЙЧĔ

Агротехникăна пăснине хирĕç кĕрешмелле

ВĂРНАР. Маленков ячĕпе тăракан колхозăн уй-хирĕсем район центрĕ çумĕнчен пуçланса каяççĕ. Кунтан МТС агрономĕсем те, районти ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекенсем те час-часах иртсе çӳрессĕ.

Анчах ку колхозра çураки ĕçĕсем ытла та вăрăма тăсăлса пырассĕ. Колхоз тĕшши тырăсем акма апрелĕн 24-мĕшĕнче тухнă. Ир акакан пĕрчĕллĕ культурăсене пурĕ 434 гектар акса хăвармалла. Иртнĕ эрне хушшинче вара 221 гектар çеç акнă.

Колхоз çурхи тырăсен пысăкрах пайне кĕрхи çĕртме тунă лаптăксем çине акать. Тăпрана нӳрĕк тытса хăварас шутпа кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене пĕтĕмĕшпех сӳрелемелле пулнă. Анчах кунта çак ĕçе хакламассĕ. Кĕрхи çĕртме тунă участоксене 26 гектар çеç сӳреленĕ. Вăхăтра сӳрелемен пирки тăпра типнĕ, унта халĕ тӳрех культиваци туса çуртри акассĕ. Хăшпĕр бригадăсем кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене тепĕр хут сухаласа акрĕç.

Колхозра 4 трактор ĕçлет. Тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли 3 сеялка пур. Унсăр пуçне колхозăн лашасемпе ĕçлемелли сеялкăсем çиччĕ. Майăн 3-мĕшĕнче лашапа ĕçлемелли 3 сеялкăпа кăна çуртри акрĕç. Çав вăхăтрах уй-хир бригадисенче, агротехникăна тӳрремĕнех пăсса, уйрăм культурăсене алăпа акассĕ.

— Эпир сеялкăпа кĕме май çук лаптăксене çеç алăпа акатпăр,—тессĕ уй-хир бригадирĕсем О. Григорьев, В. Иванов, И. Числов юлташсем. Çак сăмахсемпе вĕсем агротехникăна пăснине сирсе яма пăхассĕ. Григорьевпа Иванов бригадирсем тӳрем вырăнсенех 3—4-шар гектар çĕрĕ, Числов бригадир 11 гектар утăлăх вика, 5 гектар силос тума хĕвелçаврăнăш алăпа актарнă. Çакă вăл бригадирсем агротехникăна пăснине пĕлтерет. Асăннă бригадăсемех алăпа 80 гектар клевер акса хăварнă.

Тырăсене хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ меслетпе кунта пачах акмассĕ.

Вăрлăхсене яровизацилесе тата имçамсемпе чӳхесе акма палăртнă. Çапах та çакна нихăш уй-хир бригадинче те пурнăçа кĕртсе пымассĕ. Колхозăн çуртри вăрлăхĕсем III-мĕш класлă кондицие çеç ларассĕ. Çапах та вăрлăха акиччен сывлăшпа ăшăтмассĕ.

Колхозра кĕрхи тырăсен калчисене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене япăх пурнăçлассĕ. Ыраш калчине 220 гектар çинче минераллă удобрени тата çĕрнĕ тислĕк сапса панă та лăпланнă. Калчасене сӳрелемен. Халĕ кĕрхи тырă калчисене сӳрелемелли вăхăт иртсе пырать ĕнтĕ.

Уй-хир ĕçĕсене агротехникăна пăсса тăвассĕ. Çапах та районти ялхуçалăх пайĕ çав çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть. Участокри агроном Н. Васильев юлташ çураки пуçланнăранпа колхоза пырса та курман. Кунта иртнĕ кунсенче районти ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ М. Максимов юлташ пулнă. Вăл та агротехникăна пăснисене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади:
П. СМИРНОВ,
С. ФЕДОТОВ, П. ТИХОНОВ.

Политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатнипе

СОВЕТСКИ. (Телефонпа). Районти колхозсем, Етĕрне тата Элĕк районĕсенчи колхозсемпе социализмла ăмăртса ĕçлесе, çуркуннехи хир ĕçĕнче ӳсĕмсем тăвассĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи 2-мĕшпе 4-мĕш уй-хир бригадисем ир акмалли культурăсене акса пĕтерчĕç. Вирпе кантăрсăр тата çĕрулмисĕр пуçне, колхоз çурхи тырăсем акса хăвармалли плана паян-ыран пĕтĕмпех тултарать. Ĕç пахалăхĕ аван, колхозниксем агротехника правилисене çирĕппĕн пăхăнса ĕçлессĕ. Ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе уйрăмах 2-мĕш бригадăри çамрăк сухаçăсем—Федоров, Васильев, Викторов, Демьянов, Николаев комсомолецсем аван тĕслĕх кăтартассĕ.

Ытти çулсенче хуçалăх ĕçĕсемпе каярах юлса пынă колхозсем кăçал лайăх тĕслĕхсем кăтартассĕ. Сăмахран, Максим Горький ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ иртнĕ çулсенче кая юлса пынă. Кăçал ку колхоз малти ретре пырать. Артель ир акмалли культурăсене акса пĕтерчĕ. Колхозниксем выльăх апачĕ тумалли культурăсене акассĕ. Силос тумалли культурăсем акмалли задание тултарнă.

Хуçалăх ĕçĕсенче ӳсĕм туни колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатнинчен килет. «Дружба» колхозра, сăмахран, вуншар агитатор кулленех тенĕ пек уй-хирте ĕçлекен колхозниксем хушшинче пулассĕ. Вĕсем колхозниксене хаçат-журнал вуласа парассĕ, политикăлла темăсем тăрăх тăтăшах калаçусем ирттерессĕ. Çураки пуçланнăранпа кăçал бригадăсенче 60 номер «боевой листок» кăларнă.

Ытти колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем те колхозниксен социализмла ăмăртăвне вăйлатса пыма тимлĕн пулăшассĕ.

С. НАЛИМОВ.

Сӳрĕклĕхе пĕтермелле

ШĂХАСАН. Куйбышев ячĕпе, Молотов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Гвардеец» тата ытти чылай колхозсенче ир акакан тырăсене çак кунсенчех акса пĕтерессĕ. МТС-ри механизаторсем нумайăшĕ колхозсенче пĕр татти-сыпписĕр ĕçлессĕ. Антонов, Григорьев, Яшманов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем колхозсенчи уй-хир бригадисемпе лайăх çыхăну тытса ĕçлессĕ. Колхоз руководителĕсем те механизаторсемпе хăйсен туслăхне çирĕплетессĕ.

Анчах та районти хăшпĕр колхозсенче çураки ĕçĕсене хăвăртлатассишĕн тăрăшмассĕ. «Дружба», «Знамя», Суворов ячĕпе тăракан колхозсенче техникăпа тата туртăм вăйĕпе туллин усă курмассĕ. «Знамя» колхозра СТЗ трактор, вăхăтра краççын кӳрсе пыманнине пула, 20 сехет ытла ĕççĕр ларнă. Колхоз кладовщикĕ Г. Агапов ĕçкĕре çӳрет.

Хăшпĕр колхозсенче çураки ĕçĕсене планпа кăтартнă вăхăтра туса пыраймассĕ. Мичурин ячĕпе тăракан, «Большевик», «Память Ильича» колхозсенче туртăм вăйĕпе туллин усă курмассĕ. Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра агротехника правилисене пăсассĕ, кунта 45 гектар çĕре 8—10 сантиметр тарăнăш кăна сухаласа акнă. Колхозăн лашапа ĕçлемелли сеялкисем чылай чухне ахалех ларассĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ К. Степанов юлташ) 20 гектар çĕлĕ алăпа акнă.

А. МАЛЬЦЕВ.

Çитменлĕхсене пĕтерес пулать

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттернинчен тырпул тухăçлă пуласси нумай килет. Çак чăнлăха районти хăшпĕр колхозсен руководителĕсем ниепле те ăнланса илесшĕн мар. Сăмахран, «Коммунизм» колхозра çураки ĕçĕсене тума тытăннă кунсенчех агротехникăна пăсни палăрчĕ. Ялхуçалăх министерстви тата районти ялхуçалăх пайĕ нумай çул ӳсекен курăксене алăпа акма юраманни çинчен вăхăтра асăрхаттарнă пулин те, колхозра клеверпа тимофеевка вăррине кăçал та алăпа акнă. Кĕрхи тырăсен калчисемпе курăксене удобренисем сапса памалли плана тултарман.

Чылай бригадăсенче çурхи тырăсене акма тăпрана 5—10 сантиметр тарăнăш çеç сухалассĕ. Колхозăн, сĕлĕпе урпасăр пуçне, вăрлăхсем акма юрăхлă кондицие лармассĕ. Çапах та вăрлăха сортлас, хĕвелпе ăшăтас ĕçе организацилемен.

Хăшпĕр культурăсен вăрлăхĕ акма çитмест. Вир вăрлăхĕ пачах хатĕрлемен. Çитмен вăрлăхсене «Гигант» колхозран «Заготзерно» Çĕрпӳ пунктĕнчен илме кăтартса панă. Анчах вăрлăхлăх тырă вăхăтра илсе килмен.

«Коммунизм» колхозра парти организацийĕ çураки ирттерес ĕçре хăйĕн ответлăхне туйса илмен-ха. Вăл колхозниксем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе сарса яман. Январь уйăхĕнчепе стена хаçачĕ тухман, малта пыракан çынсен ячĕсене кăтарту хăми çинче паллă тумассĕ.

Колхозра тăрăшса ĕçлекен бригадăсем те пур. Виççĕмĕш бригадăнах илер. Бригадир Г. Иванов юлташ ертсе пынипе кĕрхи тырăсен калчине удобрени сапса парчĕç тата сӳрелерĕç. Ака-суха ĕçĕсене те пысăк пахалăхпа хăвăрт туса пырассĕ. Анчах бригада опытне ытти бригадăсем сарни çук-ха.

В. ЕФИМОВА.

ÇУРАКИНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ

ЭЛĔК, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). «Дружба» колхоз членĕсем тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешессĕ. Ăмăртса ĕçлеме илнĕ обязательствăсене пурнăçласа колхоз çураки ĕçĕсене хăвăрт ирттерет.

Майăн 4-мĕшĕ тĕлне кунта 235 гектар çине çурхи тырăсем акнă, ир акакан культурăсене акмалли плана пĕтĕмпех тултарнă. Кунсăр пуçне, 30,6 гектар çине нумай çул ӳсекен курăксене сеялкăсемпе ретлĕн акнă, силос культурисемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтернĕ.

Çуракинчи ĕçсен ăнăçлăхне колхозниксемпе МТС механизаторĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени татса парĕ. Колхозра ĕçлекен трактор бригади (бригадирĕ И. Кузьмин юлташ) кашни кун 20—24-шар гектар тырă акса пычĕ. Трактористсем сменăри нормăна куллен 120—125-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

«Знамя коммунизма» колхозăн тĕшши тырăсемпе техникăлла культурăсем пурĕ 272 гектар акмалла пулсан, майăн 4-мĕшĕ тĕлне 221 гектар акрĕ. Хальхи вăхăтра колхозăн пур бригадисем те техникăлла культурăсем акма çĕре çемçетсе хатĕрлессĕ.

А. МЕШКОВ.

Пахча çимĕç акнă

КУКЕÇ. «Правда» колхоз пахча çимĕçрен пысăк тупăш илет. Кунта 20 çынран пахча çимĕç звени организациленĕ. Звенона А. Григорьева ертсе пырать.

Парниксене помидор вăррипе купăста вăрри акса хăварчĕç.

Пахча çимĕçсене сапса пама кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухса хатĕрленĕ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.



1953 çулхи Майăн Пĕрремĕшне Мускавра уявлани.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайра—Мускав гарнизонĕнчи çар парачĕ. Пехота Хĕрлĕ площадьре. Сылтăм енче—ĕççыннисен представителĕсен демонстрацийĕ Хĕрлĕ площадьре.

А. БАТАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ыран—Радио кунӗ



ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: сулахайри—Шупашкарти Досааф радиоклубӗн мастерскойӗнче. Радио ӗçне юрататакан çамрӑксем Ю. Моисеевпа А. Баншаев икӗ лампӑллӑ приемник пухаççӗ. Сылтӑмри—Шупашкарти электроаппаратура заводӗнче ӗçлекен слесарь Михаил Нестерович Дорофеев çемйинче радио итлеççӗ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Коммунизмла воспитани памалли хӑватлӑ хатӗр

Совет çыннисем кашни çулах майӑн 7-мӗшӗнче Радио кунне паллӑ тӑваççӗ. Çав куна 1895 çулта вырӑссен паллӑ физикӗ Александр Степанович Попов хӑй *радиоприемник туни çинчен пӗлтернӗ.* А. С. Попов питӗ пысӑк ӗç тунӑ. Вара *тӗнчипе чи çӗнӗ ытарлӑ—радио аталанма пуçланӑ. Халӗ ӗнтӗ миллионшар çын*сем радиопа куллен-кун усӑ кураççӗ.

1896 çулхи мартӑн 24-мӗшӗнче Петербургри университетӑн пӗр çуртӗнчен тепӗр çуртне (вӗсен хушши 250 метр пулнӑ) тӗнчере пӗрремӗш радиограмма панӑ. Унтанпа 57 çул çеç иртнӗ-ха. Халӗ ӗнтӗ радиотехникӑпа; электричество хумӗсемпе питӗ нумай енӗпе усӑ кураççӗ.

Хальхи вӑхӑтра радиотелеграф тӑрӑх пиншер километрти çынсемпе çыхӑну тытаççӗ. Радио тӑрӑх телеграммӑсем парассине аппаратсемпе туса пыраççӗ. Радиотелефон—радио аталанӑвӗнчи пысӑк тапхӑр пулнӑ. Халӗ радиотелефон тӑрӑх самолетпа вӗçсе пыракан çынпа, хамӑр çӗршыври инçетри вырӑнта пӑрахут çинче ларса пыракан е пӗр-пӗр шырав ушкӑнӗпе пӗрле çӳрекен çынпа калаçма, унӑн сассине уйӑрса илме пулать.

Вырӑс ученӑйӗсемпе инженерӗсем, радиотелеграф, унтан радиотелефон тунӑ хыççӑн, радиовещани тӗлӗшпе ӗçлеме тытӑннӑ. Радиовещани—радио тӑрӑх сӑмах кӑна мар, музыка та илтӗнмелле туни пулать. Музыка таса илтӗнмелле тума питӗ лайӑх передатчикпа приемник тумалла пулнӑ. Çапах та кун пек пысӑк задачӑна ӑнӑçлӑ пурнӑçланӑ. Ку ӗçе чи малтан Совет Союзӗнче тунӑ. 1922 çултах, В. И. Ленин кӑтартса панипе, пирӗн çӗршывра пӗррӗмӗш радиовещани станцийӗ туса ӗçе янӑ. Вӑл ун чухне тӗнчери чи пысӑк хӑватлӑ станци пулнӑ.

Совет çӗршывӗнче радиотехника хӑвӑрт аталанса пыни совет халӑхӗн генилле çулпуçӗсем ку ӗçе пысӑка хурса хакланичен килнӗ. Вӗсем радио социализм строительствинче, массӑсене коммунизмла воспитани парас ӗçре пысӑк вырӑн йышӑнассине малтанах курса тӑнӑ. Владимир Ильич 1918—1920 çулсенчех, ун чухнехи радиоаппаратсем чаплӑ пулман пулин те, техникӑн çӗнӗ отраслӗ ӳснине курса, «Мускавра вулакан хаçата пӗтӗм Росси итлемелли» кун часах çитӗ, тесе каланӑ.

Граждан вӑрçи чарӑннӑ хыççӑнах, 1922 çулта, çамрӑк Совет республики экономика енӗпе пысӑк йывӑрлӑхсем тӳснӗ пулин те, И. В. Сталин патне янӑ çырура В. И. Ленин çапла кӑтартса панӑ: «Радиотелефон тӑрӑх çыхӑну организацилес ӗçе туса çитерме тата ӗçлеттерме юрӑхлӑ çаспа калаçакан аппаратсем туса хатӗрлеме укçа шеллес мар», тенӗ. (Соч., 33 т., 324 стр.). Сӑмахпа музыкӑна инçете парассипе пӗрлех, радио тӑрӑх сӑмахпа музыка вӑйлӑрах илтӗнмелле тӑвакан техникӑна, пысӑк залсенче, вокзалсенче, площадьсенче радио итлемелли техникӑна аталантарас тӗлӗшпе ӗçлесе пынӑ.

Телевидени—радиовещанин чи çӳлти сыпӑкӗ. Телевизор халӑх массисене культурӑпа искусство çитӗнӗвӗсемпе тата çывӑхрах паллашма май парать. Совет Союзӗнчи чылай облаçсенче телевизор передатчикӗсем ӗçлеççӗ. Унти халӑх вуншар пин телевизор туяннӑ. Телевизор туяннӑ çынсем килтех çӗнӗ кинофильмсем кураççӗ, çӗршыври чи лайӑх театрсенче лартакан спектакльсене кураççӗ, столицӑри стадионсенче пулакан спорт ӑмӑртӑвӗсене пӑхаççӗ.

Совет çыннисем, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, Ленинпа Сталин çӗршыва радиофикацилесси çинчен кӑтартса панисене ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пыраççӗ. ССР Союзӗнче хӑватлӑ радиопромышленность ӗçлет, радиостанцисем нумай туса лартнӑ. Радиостанцисем Совет Союзӗн чи инçетри вырӑнсемпе те радиотелеграф тӑрӑх çыхӑну тытма, аслӑ Тӑван çӗршывӑн кирек хӑш вырӑнта та Мускавран паракан радиопередачӑсене итлеме май параççӗ.

Социализмран коммунизма куçма хатӗрленмелли малтанхи условисенчен пӗри общество членӗсене культура енӗпе нумай ӳстересси пулать. Совет çӗршывӗнчи радиовещани—массӑсене коммунизмла воспитани памалли хӑватлӑ хатӗр. Вӑл политикӑлла тата наукӑлла пӗлӳсене халӑх хушшине сарма, ӗçа организацилемелли чи лайӑх меслетсене пропагандӑлама пулӑшать. Пирӗн радио хуласемпе ялсенчи миллионшар ӗççыннисене аслӑ вырӑс халӑхӗн, тӑванла союзлӑ республикӑсенчи тата халӑх демократи çӗршывӗсенчи халӑхсен литературипе тата искусствипе паллаштарать. Совет Союзӗн чи инçетри вырӑнӗсенче пурӑнакансем те радио тӑрӑх çӗнӗ хыпарсене час пӗлеççӗ, хамӑр çӗршыври тата урӑх çӗршывсенчи ӗçсем çинчен пӗлсе тӑраççӗ.

ССР Союзӗнче хуласене радиофикацилес ӗçе тӗпрен илсен туса çитернӗ. *Ялсене* радиофикацилесе çитересси çывӑх вӑхӑтра пурнӑçламалли задача пулса тӑрать. Çапла вара кашни килте громкоговоритель е радиоприемник пулать. Юлашки икӗ çул хушшинче ялсенче радиофикаци енӗпе нумай ӗçсем тунӑ. Колхозниксем хӑйсем те çак ӗçе активлӑ хутшӑнаççӗ. Вӗсем пралук карма юпасем хатӗрлеççӗ, лини карма пулӑшаççӗ. Чылай облаçсенче радиотрансляци линийӗсене пӗтӗм халӑх хутшӑннипе тӑваççӗ.

Çӗршывра радиофикаци ӗçӗ вӑрçӑ хыççӑнхи вӑхӑтра анлӑн сарӑлчӗ. Ку вӑл партипе правительство ӗçыннисене культура енӗпе тата политика енӗпе ӳстерсе пырассишӗн куллен-кун тӑрӑшни çинчен калать. Пирӗн çӗршывра юпасем çине пралук çакса тата çӗр айне хурса çӗршер пин километр радиофикаци линийӗсем тӑваççӗ. Ялсенче вуншар пин радиоузелсем туса лартаççӗ, миллионшар колхозниксен килӗсене çӗнӗрен радио кӗртеççӗ. Çак пиллӗкмӗш пилӗкçуллӑхра громкоговорительсемпе радиоприемниксен шутне пилӗк хут ӳстерме палӑртса хунӑ.

Радиофикаци ӗçне хӑвӑртлатма техникӑри çӗнӗ майсемпе усӑ курни пулӑшать. Сӑмахран, çакӑн пек тӗслӗх илсе пӑхӑпӑр. Вӑрмансӑр районсенче юпасем лартма йывӑç тупма йывӑр. Халӗ ӗнтӗ ун пек вырӑнсенче пралука, юпасем çине карас вырӑнне, çӗр айне хураççӗ.

Совет Союзӗнчи радио промышленноçӗ батарейӑллӑ тата сутатмалли линири электричествӑпа ӗçлекен приемниксем туса кӑларассине çултан-çул ӳстерсе пырать. Юлашки çулсенче лайӑх ӗçлекен громкоговорительсемпе радиолампӑсем туса кӑларма пуçланӑ. Приемниксемпе вӗсен пайӗсене туса кӑларнӑ çӗрте çӗнӗ технологие ӗçе кӗртнӗ, çапла вара йӳнӗ тата лайӑх ӗçлекен радиоприемниксем туса кӑларма тытӑннӑ. Ун пек радиоприемниксен шутне «Б-921», «Тула», «Искра» тата «Родина» радиоприемниксем кӗреççӗ.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ хамӑрӑн Тӑван çӗршывра коммунизм тумалли аслӑ программа палӑртса йышӑнчӗ. Съезд решенийӗсенче ССР Союзӗнче çыхӑну хатӗрӗсемпе радиовещани хатӗрӗсене малалла аталантарса пымаллине те кӑтартса панӑ. Пиллӗкмӗш пилӗкçуллӑхра пирӗн радиовещани станцисен хӑватне чылай ӳстермелле. Радиовещани приемникӗсемпе телевизорсем туса кӑларасси икӗ хут ӳсет.

Партин XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ директивӑсенче питӗ кӗске хумлӑ радиовещание сарса пыма палӑртнӑ. Çак çӗнӗ йышши радиовещани сасӑ лайӑххрах илтӗнмелле тума, атмосферӑри чӑрмавсенчен хӑтӑлма тата ытти радиостанцисем чӑрмантармалла мар тума май парать. Питӗ кӗске хумлӑ радиовещани пысӑк хуласенчен паракан радиопередачӑсен программине пысӑклатма май туса парать. Пысӑк мар территориллӗ облаçсенче тата национальлӗ республикӑсенче питӗ кӗске хумлӑ радиовещани облаçсемпе вырӑнсенчи радиовещание тӗпренех лайӑхлатма пулӑшать.

Съезд йышӑннӑ директивӑсенче çавӑн пекех тата радиорелейнӑй çыхӑнӑва сарса пыма кӑтартса панӑ. Ку вӑл—çӗнӗ йышши радиоçыхӑну. Вӑл халӑх хуçалӑхӗнче, радиовещанипе телевиденире пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан ӗç пулать.

Эпир, совет çыннисем, радио пирӗн çӗршывра пуçланса кайнишӗн, хамӑр çӗршывра радиофикаци ӗçӗ пысӑккӑн сарӑлнишӗн хӗпӗртетпӗр.

Совет çӗршывӗнчи радио сасси пӗтӗм тӗнчене илтӗнет. Пирӗн радиостанцисем мӗнпур çӗршывсенчи миллионшар çынсене Совет Союзӗ çинчен, ССР Союзӗнчи ӗççыннисен телейлӗ пурнӑçӗ çинчен каласа параççӗ. Вӗсем халӑх демократи çӗршывӗсенчи халӑхсене пирӗн çӗршыври коммунизм строительстви чаплӑ опычӗ çинчен пӗлтереççӗ. Совет çӗршывӗнчи радио вӑрçӑ чӗртсе яма тӑрӑшакан империалистсене тӑрӑ шыв çине кӑларма, пӗтӗм тӗнчери ӗççыннисене миршӗн тата демократишӗн кӗрешме мобилизацилеме пулӑшать.

З. ТОПУРИА,
ССР Çыхӑну министрӗн заместителӗ.

Колхозлӑ ялта радио калаçать

Совет саманинчи чаплӑ поэт В. В. Маяковский *хӑйӗн «Радиоагитатор» ятлӑ сӑвинче радио çинчен çапла каланӑ: «Этемлӗхӗн çакӑн пек ӗмӗт халиччен пулман. Ӗлӗк ун çинчен малтанах пӗлсе* каланӑ пулсан, çынсем ытла та тӗлӗннӗ пулӗччӗç», тенӗ.

Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑра*кан колхоз членӗ 70 çулхи Ф. М. Шимин юлташ, талантлӑ поэт шухӑшне пӗлнӗ пе*кех çапла калать:

— *Çын сассине темиçе пин километр*тан итлеме май пур тесе ӗлӗкрех каланӑ пулсан, эпӗ ӗненес те çук. Халӗ эпӗ куллен Мускавран пӗлтерекен çӗнӗ хыпарсене, тӗрлӗрен калаçусене радио тӑрӑх итлетӗп. Мӗн тери савӑнӑç!

Партипе правительство тӑрӑшнипе пирӗн çӗршывра нумай ялсенче колхозниксен килӗсене радио кӗртнӗ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхозӑн та радиоузел пур. Колхоз членӗсем çӗнӗ хыпарсене тата ялхуçалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх иртерекен калаçусене итлеççӗ. Çапла вӗсем хӑйсен пӗлӗвӗсене ӳстереççӗ, агрозоотехникӑна вӗренеççӗ. Ку вӑл çӗрӗç культурине ӳстерме, вӑйлӑ тыр пул туса илме пулӑшать.

Колхозри паллӑ доярка Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ илнӗ Клавдия Ситухина ӗçре куллен ех пысӑк ӳсӗмсем тӑвать. Вӑл кӑçалхи тӑватӑ уйӑх хушшинче кашни ӗнерен 800—1.000-шер литр сӗт суса илнӗ. К. Ситухина çапла калать:

— Эпӗ çӗршыври паллӑ дояркӑсен калаçӑвӗсене радиопа итлетӗп, вӗсен ӗç опычӗпе усӑ курма тӑрӑшатӑп. Радио мана куллен ех пулӑшать, хамӑн ӗçри пултарулӑха ӳстерме май парать.

— Хаçат-журналсемпе, кӗнекесемпе пӗрлех, радио колхозниксене çӗрӗç культурине ӳстерме пулӑшакан пысӑк вӑй,—тет Социализмла Ӗç Геройӗ А. Д. Ашанин.

Радиопередачӑсем колхозниксемпе колхозницӑсене ӗç çине коммунистла пӑхма вӗрентеççӗ, Тӑван çӗршыв ырлӑхӗшӗн ырми-канми ӗçлеме хавхалантараççӗ. Радио тӑрӑх Тӑван çӗршывра пулса иртекен паллӑ ӗçсем *çинчен, коммунизмӑн аслӑ стройкисем çинчен хӑвӑрт пӗлме пу*лать. Радио колхозниксен политикӑлла пӗлӗвне хӑпартма, вӗсен культурӑлла шайне ӳстерме пулӑшать, колхоз произ*водствинче ӳсӗмсем тума вӗрентет.*

Колхозри парторганизаци радиопа ан*лӑн усӑ курма тӑрӑшать. Ырӑнти радио*узел *тӑрӑх политика, наука тата ялхуçа*лӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх лекцисемпе докладсем иртереççӗ. Колхоз членӗсем «Тӗнчери халӑхсем миршӗн кӗрешни» çинчен тата вӑйлӑ тырпул туса илесси çинчен паракан лекцисене хапӑл туса итлерӗç. Вӑтам шкулти парторганизаци пуçарнипе педагогика ыйтӑвӗсем тӑрӑх радиопа калаçусем тӑтӑшах иртереççӗ.

Колхозри радиоузел микрофонӗ умӗнче колхоз председателӗ Социализмла Ӗç Геройӗ С. К. Коротков, председатель заместителӗ Социализмла Ӗç Геройӗ И. П. Пупин тата колхозри ответлӑ участоксене ертсе пыракан ытти работниксем тӑтӑшах тухса калаçаççӗ. Вӗсем колхоз умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнлантарса параççӗ, уйрӑм бригадӑсемпе фермӑсем мӗнле ӗçленине хаклаççӗ. Агитаторсем çуракине кӗске срокра вӗçлессишӗн социализмла ӑмӑрту мӗнле пыни çинчен каласа параççӗ.

Кунсӑр пуçне, радио тӑрӑх колхозри художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗн концерчӗсене итлеме пулать. Колхоз членӗсем классикӑлла музыкӑна тата совет композиторӗсем çырнӑ произведенисене юратса итлеççӗ. Революциччен ялсенче музыка инструменчӗсем пачах та пулман. Хальхи вӑхӑтра колхозлӑ ял çыннисем рояльпе выляние, симфонилле оркестр панӑ концертсене итлеççӗ.

Колхозниксен пурнӑçӗнче радио паллӑ вырӑн йышӑнать. Вӑл обществӑлла хуçалӑха, ял çыннисен культурине ӳстерес ӗçре пысӑк пулӑшу парать.

Н. ЛЕОНИДОВ.

Радио пурнӑç йӑлине кӗчӗ

Чӗрӗк ӗмӗр каярах Пӑрачкаври ӗççыннисем малтанхи хут радио сассине илтнӗ. Ӗççыннисенчен нумайӑшӗ, ун чухнехи çамрӑк ачасем, çак хавaслӑ куна паянхи пек астӑваççӗ.

Педагогика училищин шурӑ сӑрпа сӑрланӑ чул çуртӗнче юнашар пуçламӑш шкулӑн çуртӗ ларать. Çак çуртра ӗнтӗ Пӑрачкавра чи малтанхи хут тӗлӗнмелле сасӑсем илтӗнме пуçланӑ. Пуçламӑш шкула ун чухне детекторла радиоприемник вырнаçтарса лартнӑ. Вӑл ялти пӗртен-пӗр радиоприемник пулнӑ. Радио кӗртекенсем педагогика техникумӗнче вӗренекенсем тата учительсем пулнӑ.

... Пуçламӑш шкул патне ун чухне пионерсемпе комсомолецсем, учительсем, агрономсем, врачсем, хресченсем ушкӑнӗушкӑнӗпе пынӑ. Вӗсем, черет йышӑнса, наушниксене хӑлха патне тытса, Горькири радиовещани станцийӗнчен паракан передачӑсене итленӗ. Пӗрисем, хутла пӗлекеннисем тата çамрӑксем наукӑн чаплӑ çитӗнӗвӗшӗн савӑннӑ, ўнпа мухтаннӑ, карчӑксемпе шур сухаллӑ мучисем радиона «асамлӑ, таса мар вӑй-хӑват» тесе каланӑ.

Радио çинчен часах таврана ырӑ хыпар сарӑлнӑ. Унпа интересленекенсем нумайлансах пынӑ. Вӗсем, хӳларан ярса панӑ чертежсемпе усӑ курса, хӑйсен вӑйӗпе радиоприемниксем тума хӑтланса пӑхнӑ.

Часах лампӑллӑ радиоприемниксем те илсе килнӗ. Вӗсем питех те сахал пулнӑ, çавӑнпа та приемниксене хӑшпӗр учрежденисене кӑна: волисполкома, çыхӑну кантурне, педагогика техникумне вырнаçтарса лартнӑ.

Вӑл кунсем халӗ те асран каймаççӗ. Çуллахи ӑшӑ кунсенче, Сталин урамӗнчи çыхӑну кантурӗн çурчӗн уçса пӑрахнӑ чӳречи умне халӑх ушкӑнпа пухӑнса радиопа совет çыннисем çинчен, ялсенче пӗрлешӳллӗ хуçалӑхсем организацилени çинчен, унта та кунта та туса лартакан пысӑк заводсем çинчен, халӑха телейлӗ те савӑнӑçлӑ пурнӑç патне ертсе пыракан Коммунистсен партийӗ çинчен лекцисемпе докладсем итлетчӗç. Час-часах радио тӑрӑх юрӑ-ташӑсем илтӗнетчӗç.

Радио совет çыннисен пурнӑçне савӑнӑç кӳнӗ. Телейлӗ те савӑнӑçлӑ пурнӑçра радио питех те кирлӗ пулса тӑнӑ.

Чӑваш республикинчи пысӑк е пӗчӗк ялсенче эфир тӑрӑх инçетри, анчах çывӑх та юратнӑ Мускав сасси илтӗннӗ чухне çыннӑн чӗринче мӗн тери хавaслӑ туйӑм çуралмасть пулӗ!

Пӑрачкавра малтанхи хут радио сасси илтӗннӗренпе 25 çул иртрӗ. Радио совет çыннин пурнӑçӗнче пысӑк вырӑн йышӑнчӗ.

1938 çултанпа район центрӗнче радиоузел ӗçлет. 1.050 çуртра радио калаçать. Районта çавӑн пекех совхозра тата Долгая Поляна ялӗнче радиоузелсем пур. Радио кӗртекен килсен йышӗ ӳссех пырать.

Радио — пур çӗрте те. Ана Пӑрачкав тата Сиява МТС-ӗсенче, мӗнпур клубсемпе вулав çурчӗсенче, Хӗрлӗ кӗтессенче, учрежденисемпе предприятисенче итлеççӗ. Радиосӑр ял районта çук.

Районти ӗççыннисем Мускавран, Ленинградран, Киевран, Ивановӑран, Бакуран, Владивостокран, Кишиневран, Новосибирскран, Хусантан, Севастопольтен паракан передачӑсене итлесе савӑнаççӗ.

Радио тӑрӑх ӗççыннисем Тӑван çӗршывра пулса иртекен паллӑ ӗçсене, пысӑк ӳсӗмсене пӗлеççӗ, капитализмла çӗршывсенчи асаплӑ пурнӑç çинчен илтеççӗ.

Радио пире вӗрентет, вӑл совет çыннисен пурнӑçне савӑнӑç кӳрет.

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн историллӗ директивисенче пирӗн çӗршывра радиовещани ӗçне тата анлӑрах сарса пыма палӑртнӑ. Çавна май Пӑрачкав районӗнчи радиовещани те ӳссе пымалла. Çак пилӗкçуллӑхра Сталин ячӗпе, Ворошилов ячӗпе, Жданов ячӗпе, Молотов ячӗпе тӑракан, «Трактор», «Красный пахарь», «Луч» колхозсене радиофикацилемелле. Радиоприемниксен йышӗ те нумай ӳсмелле.

Ф. ТОНЫШЕВ.

Выляв укçи илеççӗ

ИШЛЕЙ. Районти перекет касси ӗççыннисене государство заемӗсен выляввӗсем тӑрӑх кашни çулах укçа нумай тӳлет. 1952 çулта заем выляввӗсем тӑрӑх пӗтӗмпе 280 пин тенкӗ е 1951 çулхинчен 44 пин тенкӗ ытларах тӳленӗ.

Кӑçалхи пӗррӗмӗш кварталта ӗççыннисене 124 пин тенкӗ выляв укçи панӑ. Кӑçал район центрӗнчи пӗр служащи государствӑн 2 процентлӑ заемӗпе 10 пин тенкӗ выляса илнӗ.

Перекет кассинче вкладчиксен хисепӗ ӳссех пырать. Уйрӑмах апрель уйӑхӗнче перекет кассине укçа хывакансен йышӗ ӳсрӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.

ФЕЛЬЕТОН

Куçа курӑнман клуб

Аçта вӑна вырнаçман пулӗ ку вулав çурчӗ? Вӑл ял Совечӗн пӗр пӳлӗмӗнче те, уйрӑм колхозник килӗнче те, колхоз правлени çуртӗнче те... таçта та пулса пӑхрӗ. Пур çӗрте те тӑвӑр, пур çӗрте те ӗçлеме юрӑхсӑр.

Аçта вырнаçмалла-ши ку вулав çурчӗн?

Пӗррехинче аякран, тен, Шупашкартан та пулӗ, Уçырмари вулав çуртне шыраса аслӑ çынсем килчӗç.

— Вулав çуртне кӗрсе курасчӗ,—терӗç вӗсем хирӗç пулнӑ çынна.

— Вулав çуртне тетӗр-и?—тӗлӗннӗ пек пулса ыйтрӗ хирӗç пулнӑ çын. — Колхоз правлени çуртне пӗлместӗр-и вара? Çавӑнта пирӗн вулав çурчӗ... кӗрсенех куратӑр... кӗтесре пӗр шкаф пур.

Правленинче ӗçпе пынӑ çынсем нумай. Вӗсем вӑрӑм сӗтел хушшинче ларакан колхоз председателӗн сӑмахне итлеççӗ. Табак туртса тултарнипе урайӗнчен пуçласа мачча таранах кӑвак тӗтӗм явӑнать.

Вулав çурчӗн заведующийӗ кӗтессе хӗсӗнсе ларнӑ та сӗтел çинче выртакан хаçатсене майлать.

— Ӗç пулать-и ку! Нимӗн тума та çук вӗт,—тарӑхса калать вӑл.

Аякран килнӗ çынсем (районтан та пӗр çын пурччӗ) вулав çурчӗн ӗçне паллашма тытӑнчӗç.

«Ӗçсем пур. Спектакльсем те, концертсем те пулаççӗ. Докладсемпе лекцисем те час-часах иртереççӗ»,—çырса хучӗç тӗрӗслеме килнӗ çынсем хӑйсен блокночӗ çине.

— Сирӗн вулав çурчӗ валли уйрӑм çурт çук-и вара?—ыйтрӗç вӗсем юлашкинчен.

— Çук çав... Иккӗмӗш çул ӗнтӗ çакӑнта тертленетӗп,—кӑмӑлсӑр пулса каларӗ вулав çурчӗн заведующийӗ.

Тытӑнчӗç хӑйхи çурт шырама. Унта çитсе пӑхаççӗ, кунта çитсе тӗртӗнеççӗ. Телефон пӗр канӑçсӑр шӑнкӑртатать, ял Совет председателӗ ун-кун чупкалать... Хыпалантараççӗ килнӗ çынсем. Шыраççӗ, шыраççӗ... Юлашкинчен тупрӗç! Ял Советӗнче пӗр пушӑ пӳлӗм пулнӑ, çавӑнта вара вулав çурчӗ тума шутларӗç. Унтан пӑхрӗç, кунтан тӗрӗслерӗç—аван та пулать иккен вулав çурчӗ. Часах платниксем кантӑк касрӗç, алӑк турӗç...

Ку ӗç виçӗ çул каялла пулса иртнӗ. Унтанпа чылай улшӑнусем пулчӗç. Сахал мар çӗнӗ сведенисем те илчӗ пулӗ Канашри культурӑпа çутӗç пайӗ Уçырмари вулав çурчӗн ӗçӗсем çинчен.

Пӗр ирхине, пӗр телейлӗ кун, культурӑпа çутӗç пайӗн заведующийӗ Петров юлташ (халӗ вӑл ӗçлемест) Уçырма ялӗнче клуб лартма шутлани çинчен илтет. Çак ырӑ хыпар райисполкомра ӗçлекенсен хӑлхине те пырса кӗрет.

— Уçырмара клуб пулать! Çӗнӗ клуб!

Ара, пулмасӑр, ял Совечӗ çӗнӗ клуб тума самообложени укçине пӗтӗмпех парать, колхоз та йывӑç хатӗрлеме шутлать.

Нумай та шутласа тӑмаççӗ, райисполкомра çӗнӗ решени йышӑнаççӗ.

«Уçырма ялӗнчи вулав çуртне клуб ятне парас»—çырса хураççӗ шурӑ хут çине.

Çак решени Уçырма ял Советне хӑвӑрах персе çитет.

— Текех вулав çурчӗ мар, клуб тесе чӗнмелле. Укçа-тенкине те çавӑн пекех расходламалла, — çирӗплетсе хураççӗ паха решение.

Культурӑпа çутӗç пайӗнче те çӗнӗ приказ çыраççӗ:

«Уçырма ялӗнчи вулав çуртне клуб ятне парас. Клуб заведующийӗ пулма И. Никитина *юлташа çирӗплетес».*

Унтанпа иккӗмӗш çул çине кайрӗ ӗнтӗ. Ял Совет канцелярийӗ çумӗнчи тӑвӑр пӳлӗм халӗ ӗнтӗ вулав çурчӗ мар, ӑна клуб *тесе чӗнеççӗ.*

«Клубра» икӗ вӑрӑм сак, сӗтел çинче тӗрлӗрен хаçатсемпе журналсем выртаççӗ.

Акӑ, кас пулас умӗн, «клуба» çамрӑк*сем пухӑнма пуçларӗç. Вунӑ-вуникӗ çын* кӗнипех «клуб» тулса та ларчӗ. Текех, темӗн пек тӑрӑшсан та, ларма-тӑма вырӑн çук. Клуб заведующийӗ хӑй те кӑмака çумне хӗсӗннӗ те шахматла выляканcем çине пӑхса тӑрать.

Республикӑра Уçырмара «клуб» пурринe пурте пӗлсе çитрӗç. Унтан та кунтан «клуба» хӑнасем киле пуçларӗç. Пӗрисем «Нарспи» пьесӑпа килеççӗ, теприсем «Иванпа Марье» юмаха лартса парасшӑн, хӑшӗ-пӗрисем концерт пуласси çинчен пӗлтерме васкаççӗ.

Çитеççӗ хӑнасем—кураççӗ: кунта нимӗнле клуб та çук иккен.

Клуб мар вӑл, хут çинче кӑна «ялти клуб» ятлӑ.

И. КУЗЬМИН.

Хаçатсем пирки вулакансем мӗн çыраççӗ

Вырӑнти пурнӑçа тӗплӗнрех çутатмалла

Хуçалӑхпа организацилле ӗçсен ӑнӑçлӑхӗ парти организацийӗсем ӗççыннисене политикӑлла воспитани парас енӗпе тӑрӑшса ӗçленинчен килет. Çавӑнпа хаçатӑн кулленхи ӗçӗнче политикӑлла воспитани ыйтӑвӗсем тӗп вырӑнта тӑмалла. Анчах Сӗмӗрле районӗнчи «Социализмла ӗç» хаçат пирки çакна калама çук-ха.

Эпӗ цехри парторганизацине ертсе пыратӑп. Çавна май агитаторсемпе, рабочисемпе час-часах калаçусем иртеретӗп. Нумаях пулмасть калаçӑва хатӗрленнӗ май «Социализмла ӗç» хаçата кӑçалхи январь уйӑхӗнчен пуçласа пӑхса тухрӑм. Хама интереслентерекен чылай ыйтусем çине ответ илеймерӗм.

Хулари йывӑç япаласем тӑвакан завод икӗ-виçӗ çул хушши плана тултарса пыраймастчӗ. Халӗ вӑл плана уйӑхран уйӑха ирттерсе тултарса пырать. Çак ӳсӗме завод мӗне пула, мӗнле майпа тума пултарчӗ—çак ыйту мана кӑна мар, пирӗн кашни рабочие интереслентерет. Рабочисен ыйтӑвне тивӗçтерес тесе, эпӗ хаçатра асӑннӑ завод коллективӗ мӗнле ӗçлени çинчен çырнӑ материалсене пӑхса тухрӑм. Анчах тӗплӗн çырнӑ пӗр материал та тӗл пулаймарӑм. Заводран çак хаçата пӗр корреспондент та çырмасть, редакци вӗсене хаçат ӗçне хутшӑнтарма тӑрӑшмасть.

Хаçат ытти предприятисен ӗçне те çав тери çителӗксӗр çутатать. Ун вырӑнне хаçата ытти хаçатсенче вуласа пӗлме май пур пысӑк материалсемпе тултараççӗ, чылай ыйтусене хускатмасӑр хӑвараççӗ. Пысӑк статьясем çырнӑ чухне вырӑнти примерсемпе усӑ курмаççӗ.

Хаçат номертен номере тенӗ пекех коллективсем чӗнсе каланисене, пӗр-пӗр мероприяти ирттересси çинчен обком е райком йышӑннӑ постановленисене пичетлет. Анчах пичетлет те... ун çинчен манса каять. Çак чӗнсе каланисене, çӳлти органсем йышӑнакан постановленисене халӑх мӗнле йышӑнать, вӗсене йышӑнса мӗнле обязательствӑсем илет, вӑл обязательствӑсене пурнӑçлассишӗн уйрӑм коллективсем мӗнле кӗрешеççӗ, — çак ыйтусем çине хаçат ответ параймасть. Çавна пула патриотла чӗнӳсене пирӗн районри ӗççыннисем асӑрхаман пекех, ун çине çаврӑнса та пӑхман пекех пулса тухать.

Н. ПАВЛОВ.
Сӗтел-пукан комбинатӗнчи 3-мӗш цехри мастер.

Институтри хаçатсем

Чӑваш педагогика институтӗнче стена хаçачӗсем нумай тухса тӑраççӗ. Вӗсем студентсене лайӑх вӗренсе пыма, дисциплинӑна çирӗплетме пулӑшаççӗ. Студентсем пӗтӗм институтри «Педвузовец» стена хаçатне уйрӑмах юратса вулаççӗ. Хаçат институт пурнӑçӗнчи тӗрлӗ ыйтусене хускатать, студентсемпе преподавательсем партин XIX-мӗш съезчӗн историллӗ решенийӗсемпе Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем» ятлӑ ӗçне вӗренсе пынине анлӑн çутатать.

Хаçат уйӑхра пӗрре тухса тӑрать. А. Родионов художник хаçата тӗрлӗ ӳкерчӗксемпе илемлетсе кӑларать, кашни хаçатах 7—8 карикатура вырнаçтарать. Хаçатӑн кашни факультетрах корреспондентсем пур.

Институтра çавӑн пекех факультетсенчи «Филолог»», «Историк», «Биолог», «Математик» хаçатсем тухса тӑраççӗ. Ют çӗршыв чӗлхисен факультетӗнче стена хаçачӗсем нимӗç тата акӑлчан чӗлхипе тухса тӑраççӗ.

И. СЕРГЕЕВ.

„Коммунизм ялавӗ" хаçатра çырнӑ хыççӑн

„Канашри вагонсем юсакан завод юлса пынине пӗтермелле"

КПСС Канаш хула комитечӗ «Канашри вагонсем юсакан завод юлса пынине пӗтермелле» («Коммунизм ялавӗ» хаçатра иртнӗ çул декабрӗн 23-мӗшӗнче пичетленнӗ) ятлӑ çырура асӑннӑ çитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнни çинчен пӗлтерчӗ.

Мартӑн 19-мӗшӗнче КПСС хула комитечӗн бюровӗ вагонсем юсакан заводра партипе государство дисциплини мӗнле тӑни çинчен сӳтсе явнӑ. Заводра чӗртаварсемпе материалсем нормӑпа кӑтартнинчен ирттерсе расходланине, цехсенчен чылайӑшӗ плана тӑтӑшах тултарса пыманнине, брак тунине пула нумай тӑкак тӳснине палӑртнӑ.

КПСС хула комитечӗпе вагонсем юсакан завод управленийӗ цехсен ӗçне йӗркелес шутпа чылай ӗçсем туса ирттернӗ.

Рессорсемпе пружинӑсем тӑвакан цех начальникне Севастьянов юлташа тивӗçлипе ӗçлеменшӗн вырӑнтан кӑларнӑ.

Юлашки вӑхӑтра заводра ӗçе планлассине лайӑхлатнӑ, продукци пахалӑхне ӳстерме тивӗçлӗ мерӑсем йышӑннӑ.

„Хаçатра пичетленекен материалсен витӗмлӗхӗшӗн"

Январӗн 20-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаçатра «Хаçатра пичетленекен материалсен витӗмлӗхӗшӗн» ятлӑ статья пичетленнӗччӗ. Çак статьяна КПСС Чурачӑк райкомӗ бюро ларӑвӗнче сӳтсе явнӑ. Райком бюровӗ статьяра çитменлӗхсене тивӗçлипе критикленине палӑртнӑ. Хатӗрлев министерствин районти уполномоченнӑйӗ Антонов, МТС директорӗ Кондратьев, промкомбинат директорӗ Захаров, райисполкомӑн ялхуçалӑх пайӗн заведующийӗ Осипов юлташсем районти хаçатра критиклесе çырни çине тивӗçлипе пӑхманнине палӑртнӑ, малашне районти хаçатра çырни тӑрӑх вӑхӑтра тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнма, мӗнле мерӑсем йышӑнни çинчен çийӗнчех пӗлтерсе тӑма хушнӑ.

Экзамена хатĕрленесси—шкул пурнăçĕнчи ответлă тапхăр

* * *

Тăваттăмĕш класра вĕренекенсемпе ĕçлесси

Экзамен вĕçал те, ытти çулсенчи пекех, тăваттăмĕш класра вĕренекенсенчен пуçланать. Вĕсен вĕренÿ çулĕ вĕçленес умĕн вырăс тата чăваш чĕлхисемпе, арифметикăпа экзаменсем памалла. Шкул ачисем тăваттăмĕш класра вĕреннĕ хыççăн чи малтанхи хут экзамен панине асра тытса, вĕсемпе ытларах ĕçлемелле, халиччен мĕн вĕреннине аса илтерес ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсенчи IV-мĕш классенче вĕреннĕ ачасем нумайăшĕ экзамен вăхăтĕнче «5» тата «4» паллăсем илчĕç. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашнипе Маллашки ялĕсенчи шкулсенче вĕреннĕ ачасем хушшинче начар паллă илнисем пачах пулмарĕç. Хальхи вĕренÿ çулĕн малтанхи çур çулхи итогĕсем тăрăх республикăри нумай шкулсенчи ачасем вĕренÿре ĕлкĕрсе пыни палăрчĕ.

Анчах уйрăм шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймannисем те чылай-ха. Экзаменсем пуçланиччен вĕренÿре кая юлнă ачасене малта пыракан ачасемпе танлаштарма, вĕсем ăнланса илеймен темăсене тепĕр хут тĕплĕн каласа кăтартма, халиччен мĕн вĕреннине лайăхрах аса илтерме тăрăшас пулать.

Хăшпĕр шкулсенче IV-мĕш класри экзаменсене иртерме тĕплĕн хатĕрленменни çинчен калакан тĕслĕхсем те сахал мар-ха. Сăмахран, пĕлтĕр Хĕрлĕ Чутай районĕнче IV-мĕш классенче вĕреннисенчен экзамен параймасăр çав класрах иккĕ çулă юлнисем чылай пулчĕç. Красноармейскинчи вăтам шкулта IV-мĕш классенче вĕреннисенчен хăшне-пĕрне экзаменра тĕплĕ тĕрĕслемесĕрех V-мĕш класа куçарнă, çав ачасем вара кăçал вĕренÿре кая юлса пыраççĕ.

Ялăнах пĕр класпа ĕçлекен учитель кашни ачан пултарулăхне, вăл мĕнле предметпа ĕлкĕрсе пынине, мĕнле предметпа ăна вĕренме йывăррине, ачасен килти условийĕсем мĕнлине лайăх пĕлет. Унăн çавсене шута илсе кая юлакан ачана вăхăтра пулăшмалла. Çапах та хăшпĕр учительсем çакăн çинчен манаççĕ, ача хăй тĕллĕнех вĕренсе пырассине, ыттисемпе танлашма тăрăшассине шанаççĕ, экзамена хатĕрленнĕ вăхăтра та çавăн пек ачасене лайăхрах вĕрентме тăрăшмаççĕ.

Шкулти экзамен вăл ачасен пĕлĕвĕсене тĕрĕсленипе пĕр вăхăтрах пĕтĕм шкулăн ĕçне тĕрĕслени те пулать. Анчах хăшпĕр учительсем çакна шута илмеççĕ. Çавăн пиркиех ĕнтĕ Çĕрпÿ районĕнчи Хыркасăнчи пуçламăш шкулта экзамена начар хатĕрленеççĕ. Шкул заведующийĕ, вăлах IV-мĕш класри ачасен учителĕ И. Ельмаков юлташ экзамена хатĕрленме юлашки кунсенччен тытăнман пулнă.

IV-мĕш класри ачасене экзамена хатĕрлес ĕçри ответсăрлăха пĕтермелле. Кашни учителĕн хăйĕн ачисене пур предметсемпе те халиччен мĕн вĕрентнисене çĕнĕрен ăнлантарса памалла. Чăваш чĕлхипе ачасем грамматика правилисене тепĕр хут аса илчĕр. Вĕсене грамматикăлла разборсем, тĕрлĕ çыру ĕçĕсем ытларах тутарас пулать. Çавăн чухне ачасем хăйсен пĕлĕвĕсене лайăхрах çирĕплетме, тĕрĕс çырма вĕренме пултараççĕ. Ачасем уйрăмах вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхине кĕнĕ сăмахсенче «е», «я», «ю» саспаллисем вырăнне ăçта «ă» е «ĕ» çырмаллине пĕлмеççĕ. Çавăн пек сăмахсене тĕрĕс çырма вĕрентес тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçре ачасене вырăсла сăмахсене тĕрĕс калама вĕрентме тăрăшас пулать. IV-мĕш класри ачасенчен грамматикăна япăх пĕлекенсем йышлă. Вĕсем янăракан хупă сасăллă («б», «г», «д», «ж», «з») саспаллисене çырнă чухне йăнăшсем нумай тăваççĕ, грамматикăри родпа падежсене çителĕклĕ пĕлмеççĕ. Çавăнпа та ку материалсене ачасене питех те тĕплĕн ăнлантарса памалла. Вĕсем халиччен мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илнипе хăйсен пĕлĕвĕсене çирĕплетме пултарччăр. Кунсăр пуçне, малтан вĕреннĕ сăвăсемпе басньăсене те тепĕр хут аса илтермелле.

Ачасем вырăсла сăмахсене çырма пĕлменни çав тĕслĕхрен те аван курăнать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Пĕчĕкхырти шкулта вĕреннисем экзаменра «дуб» сăмаха «туп», «дверь» сăмаха «тверь», «кто» сăмаха «кдо» тесе çырнă. Вырăсла сăмахсене тĕрĕс çырма тата калама пĕлменнисем ытти шкулсенче те пур. Апла пулсан, ачасене экзамена вырăс чĕлхипе лайăх хатĕрлес тĕлĕшпе кашни учителĕнех тимлĕ ĕçлемелле.

Арифметикăпа ачасене геометри материалĕсене аса илтерес пулать. Вĕсем мĕнле йышши задачăна мĕнле майпа шутламаллине ăнланса илччĕр, задачăна шутласа кăлармалли план туса, çав планри ыйтусене тĕрĕс лартма пĕлччĕр. Ачасене япаласен хакĕсене шутласа кăларма, çĕр виçме, тарасапа виçме, панă задачăна ăсра шутлама хăнăхтарни кирлĕ.

Ачасем киле панă заданисене мĕнле хатĕрленнине кашни кун тĕрĕслесен, вĕсен вĕренÿри ответлăхĕ ÿсет.

П. НИКОЛАЕВ,

Учительсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн сотрудникĕ.

Пирĕн шкул экзаменсем умĕнхи вăхăтра

Шкулта вĕренекенсене пур предметсемпе те экзамена лайăх хатĕрлесси — шкулти учительсен пысăк тивĕçĕ. Экзамена хатĕрленес ыйтăва эпир март уйăхĕн пуçламăшĕнчех педагогика советĕнче сÿтсе явнăмăр, мĕнле ĕçсем тумаллине палăртрăмăр. Кун хыççăн çак ыйтупа кашни класрах вĕренекенсен пухăвĕсене, комсомолецсен пухăвĕсемпе пионерсен сборĕсене ирттертĕмĕр. Кашни учителе, кашни вĕренекене ГОФСР Сутĕç министерствин экзамен ирттермелли инструкцийĕпе тепĕр хут паллаштартăмăр. Физикăпа, химипе, биологипе тата ытти предметсемпе мĕн вĕреннине аса илме ятарласах уйрăм пÿлĕмсем туса, çав пÿлĕмсене вĕренÿре кирлĕ наглядлă пособисем пухрăмăр. Вĕренекенсем, малтанах çырса çапнă расписани тăрăх, учительсем пулăшнипе, физика тата химиi лабораторийĕсенче опытсем тăваççĕ. Вĕренекенсене физика учителĕ А. Н. Корнилов юлташ, Х. А. Александров, А. А. Алексеева, А. А. Федорова тата ытти учительсем экзамена хатĕрленме нумай пулăшаççĕ, хăйсен предмечĕсемпе кÿлленех консультаци ирттереççĕ, учебниксенчи йывăртарах терминсене, вырăнсене ăнлантарса параççĕ.

Вĕренÿре кая юлса пыракансене учительсем кашнине уйрăммăн пулăшаççĕ.

Геометрипе тригонометри предмечĕсемпе мĕн вĕреннине аса илнĕ май, математика учителĕсем вĕренекенсене колхоз уй-хирне илсе тухса, вĕсене уйрăм вырăнсене, çĕр лаптăкне виçме хăнăхтараççĕ.

Биологи учителĕсем ачасен класра вĕреннĕ чухне илнĕ пĕлĕвĕсене çирĕплетме вĕсене шкулти опытлă участокри практикăлла ĕçсене хутшăнтараççĕ. Кун пек туни мĕн вĕреннине тĕплĕрех ăнланма пулăшать.

Вĕренекенсене экзамена хатĕрленме пулăшас ĕçре предметлă комиссисем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕ тĕле комиссисен кашни вĕренекен экзамена мĕнле хатĕрленсе çитнине лайăх пĕлмелле. Комиссисен хăйсен ларăвĕсенче вĕрентÿ программисем мĕнле пурнăçа кĕнине сÿтсе явса, вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлеме мерăсем йышăнмалла. Çак тĕллевпе уйрăм предметсемпе вĕрентекен учительсем пĕр-пĕрин урокĕсене çÿреççĕ. Кайран вара урoксем хыççăн предметлă комиссисен ларăвĕнче хăш вĕренекене мĕнле пулăшу пама кирлине палăртаççĕ.

Х-мĕш класра вырăс чĕлхипе тата литературипе уйрăм занятисем, обзорлă лекцисем ирттеретпĕр. Вырăс чĕлхипе вĕренекенсене упражненисем ытларах тутарма тăрăшатпăр.

Ку таранччен Х-мĕш класра вырăс литературипе «Горький творчествин пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшĕ», «Вырăссен классикла литературинчи «ытлашши» образсем», «Совет литератури—миршĕн кĕрешекен литература» ятлă темăсемпе лекцисем ирттертĕмĕр.

Х-мĕш класра вĕренекенсем хăйсем те лекцисем вулаççĕ. Акă Н. Николаева, Г. Волков, К. Толстова вĕренекенсем: М. Алигер çырнă «Зоя» поэма çинчен, А. Твардовскин «Василий Теркин», К. Симоновăн «Тăшмансемпе туссем» ятлă кĕнекисем çинчен лекцисем вуласа пачĕç.

План тăрăх обзорлă лекцисем татах та пулмалла. Экзаменсем пуçланаччен çакăн пек лекцисем ирттерме палăртнă: «Совет литературин пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшĕ», «Коммунистсен образĕсем совет литературинче», «Совет литературинчи телей проблеми», «Совет литературинчи ĕç теми».

Шкулти учительсен коллективĕ вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе яланах çыхăну тытать. Апрель уйăхĕнче хамăр шкула çÿрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене ирттертĕмĕр. Пухура çак ответлă тапхăрта ашшĕ-амăшĕсен ачасене мĕнле пулăшмалли çинчен сÿтсе явăмăр.

Экзамена çулĕ пусăмра ирттересси — шкулăн чыслă та ответлă ĕçĕ. Учительсем пурте пĕр çын пек пулса тăрăшса ĕçлесен, экзамена тĕплĕн хатĕрленсе ирттерме пултарăпăр.

И. НАРЫШКИН,

Калининăри вăтам шкул директорĕ.

Тăван чĕлхепе экзамена хатĕрленесси çинчен

Юлашки çулсенче республикăри шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕç чылай лайăхланчĕ. Хальхи вĕренÿ çулĕнче тăван чĕлхене юратса тата пĕтĕм ответлăха туйса вĕрентекен учительсен йышĕ хушăнчĕ.

Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ В. Антонов юлташ тăван чĕлхене вĕрентес ĕçре грамматикăна çирĕппĕн пăхăнса ĕçлет. Вăл хăй ĕçне йĕркеллĕ, уроксене пур енчен те лайăх хатĕрленсе, идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттерет. Вĕреннĕ материала яланах аса илтерсе пырать. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймай ачасене вăхăтра пулăшать, вĕсемпе консультаци ирттерет, ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçать. Çакă вара ачасен ответлăхне ÿстерет, вĕсене урока лайăхрах хатĕрленсе пыма хĕтĕртет. Çавăнпа та вăл вĕрентекен ачасем хушшинче япăх паллăсем илекеннисем пĕрре те çук.

Кÿкеçри вăтам шкулти учитель С. Угандеев юлташ ачасене çирĕп пĕлÿ пама хытă тăрăшать, грамматикăлла разбор тума аван вĕрентет, çыру ĕçĕсене нумай ирттерет.

Тăвай районĕнчи Кармалти 7 çул вĕренмелли шкулти учитель В. Ашмарин юлташ тăван чĕлхепе çыру ĕçĕ ирттерме илемлĕ, стилĕ енчен килĕшÿллĕ, содержани енчен тарăн идейăллă текстсем е уйрăм предложенисем суйласа илет. Çавăнпа пĕрлех вăл çыру урокĕсенче ачасене воспитани пама пулăшакан текстсем çыртарать.

Вĕренÿре ачасене литература кружокĕ нумай усă парать. Калинино районĕнчи Уйкас Юнтапари вăтам шкулта ачасене пурне те литература кружокне явăçтарнă. Кружок журнал тата бюллетень кăларать, вулакансен конференцийĕсене ирттерет, ачасем мĕнле кĕнекесем вуланине шута илсе пырать. Ку шкулта вĕренекен ачасем çултан-çул тăван чĕлхепе лайăх паллăсем илеççĕ.

Анчах чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçре çитменлĕхсем нумай-ха. Учительсем уроксене методика вĕрентнĕ пек ирттермеççĕ. Чылай шкулсенче фонетикăпа морфологие вĕрентнĕ чухне ачасене тĕрĕс çырма хăнăхтарас ĕç çине сиеллĕтен пăхаççĕ, грамматикăлла разборсем тата çыру ĕçĕсем сахал ирттереççĕ. Сăмахран, Йĕпреçри вăтам шкулти VIII—Х-мĕш классенче вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче вĕренекенсене пĕрер-иккĕшер сочинени çеç çыртарнă. Йĕпреç районĕнчи Хурамалти вăтам шкулăн VIII—Х-мĕш класĕсенче вĕренекенсем те пĕрер-иккĕшер сочинени кăна çырнă. Çавăнпа та вĕренекенсем, сочиненисене план тăрăх çырма, цитатăсемпе вырăнлă усă курма пĕлмеççĕ. Ку шкулти V—VII-мĕш классенче вĕренекенсем те изложени сахал çыраççĕ, учительсем ачасен килте çыракан тетрачĕсенчи йăнăшсене ик-виç уйăх хушшинче те тÿрлетмеççĕ.

Малтан вĕреннĕ материалсене ачасене тепĕр хут аса илтерес ĕçре те çитменлĕхсем сахал мар. Йĕпреçри вăтам шкулти Х-мĕш класра вĕренекенсем сăвăсене кĕнеке çине пăхмасăр калама пĕлмеççĕ. Çакă вара учительсем вĕренекенсене малтан мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илтерсе пыман пирки пулать. Унта хăшпĕр учительсем вĕренекенсен çыру ĕçĕсене ÿстерсе хаклаççĕ, ачасен йăнăшĕсене тÿрлетме тăрăшмаççĕ. VI-мĕш класра вĕренекенсен изложенийĕсенче 5—6-шар йăнăш пур пулин те, çав изложенисене «3» паллă парса хаклаççĕ. Ку ĕнтĕ учительсем çыру ĕçĕсене хакламалли нормăсене начар пĕлнинчен килет.

Учительсен экзаменсем умĕн вĕренекенсен пĕлĕвĕсене çирĕплетмелле. Учебниксем, программăсем тата билетри ыйтусем тăрăх ачасем халиччен мĕн вĕреннине çĕнĕрен аса илччĕр. Изложенисене, сочиненисене план тăрăх çырма, цитатăсемпе вырăнлă усă курма, выводсем тума лайăх вĕренччĕр. Орфографипе пунктуацилле йăнăшсене пурне те шута илсе, ачасене тĕрĕс çырмалли правилăсем çинчен тепĕр хут аса илтерес пулать. Кашни учителĕн экзаменсем умĕнхи уроксене ирттерме уйрăмах тĕплĕн хатĕрленмелле.

V-мĕш класра вĕренекен ачасен сăмахсен составне, падежсене—ят падежĕпе тăву падежне, пару падежĕпе тăву падежне пĕр-пĕринчен уйăрма, паллă ячĕпе япала ятне уйăрса илме, местоименисене разрядсем тăрăх пайлама, тĕрлĕ наклоненири глаголсене сăпатлама лайăх пĕлмелле.

Экзамена хатĕрленнĕ вăхăтра VI-мĕш класра вĕренекенсен причастисене, деепричастисене, наречисене, татăксĕне çĕнĕрен аса илмелле, та-те союзсене япала ячĕсен вырăн падежĕн аффиксĕсенчен уйăрма тĕплĕн вĕренмелле.

VII-мĕш класра вĕренекенсен хутлă предложенисен синтаксисне, уйрăмах пăхăнуллă хутлă предложенисене тата предложенилле членсене, вĕсенче чарăну паллисем ăçта лартмаллине аван пĕлес пулать.

Аслă классенче вĕренекенсем кĕçĕн классенче вĕреннĕ грамматика правилисене те лайăх пĕлме тивĕçлĕ. Тĕслĕхрен, VI-мĕш класра хутлă сказуемăя аса илетпĕр пулсан, глагол çинчен, глаголăн вăхăчĕ, наклоненисем çинчен, вĕсене мĕнле çырмалли çинчен тĕплĕ пĕлни кирлĕ. VII-мĕш класра предложенилле членсене вĕренеççĕ. Çавăн чухне падежсем, причастисем, деепричастисем çинчен аса илтермелле.

Пур классенче вĕренекенсен те грамматика правилисене, определенисене йĕркеллĕ тата ăнланмалла каласа пама пĕлмелле. Тепĕр чухне çапла та пулать: вĕренекенсем грамматика правилисене, определенисене лайăх пĕлеççĕ, анчах çырнă чухне йăнăшсем тăваççĕ. Тĕслĕхрен, хальхи вăхăт виççĕмĕш сăпатра тăракан глаголсене мĕнле çырмаллине, хăçан çемçетекен «ь» паллă лартса çырмаллине, хăçан «каятчĕ», «кайĕччĕ» тесе çырмаллине тĕплĕ пĕлмеççĕ. Çавăнпа та глаголсем мĕнле сăпатланнине, вĕсене тĕрĕс çырмаллине тепĕр хут аса илтерни кирлĕ.

Литература вулавĕ тăрăх чи малтан паллăрах, кирлĕрех е çителĕклĕ ăнланайман произведенисем çинчен мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илес пулать. Литература вулавĕ енĕпе халиччен вĕреннĕ произведенири сăнарсене аса илмелле, илемлĕ литература чĕлхин элеменчĕсене—эпитет, танлаштару, метафора тата ыттисене те тупма пĕлмелле. Хăшпĕр пысăкрах произведенисен содержанине тĕплĕ анализ тума вĕренсе çитес пулать. Изложени текстне план тăрăх çырма пĕлмелле.

Писательсен биографийĕсене вĕсен творчествипе çыхăнтарса каласа пама вĕренмелле. Ку тĕлĕшпе вĕренекенсене уйрăм ыйтусем парса хăйсем тĕллĕн ĕçлеттермелле, ун хыççăн вăра класра конференци е доклад туса ирттермелле. Юлашкинчен учитель пĕтĕçтерсе итог туса парать. Çак ĕçе ăнăçлă туса ирттерме литература кружокĕн те пулăшмалла.

Экзамен тытмалли вăхăт нумай юлмарĕ. Пĕлтĕрхи экзаменра пулнă çитменлĕхсене шута илсе, вĕсене кăçал тумалла мар.

Малалла вĕренес ĕмĕтпе

СЕНТĔР. Çĕнĕ Юнтăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта экзамена тимлĕн хатĕрленеççĕ. Экзамена хатĕрленес ыйтăва учительсен канашлăвĕнче, комсомолецсен пухăвĕнче, пионерсен дружининче сÿтсе явнă.

Шкул директорĕ экзамена хатĕрленмелли план тунă. Мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илме тата экзамена хатĕрленме ачасем валли уйрăм пÿлĕмсем уйăрнă. Пур классенче те халиччен мĕн вĕреннине аса илеççĕ. Кунсăр пуçне, кашни класрах консультацисем, хăшпĕр темăсем тăрăх уйрăм калаçусем ирттереççĕ.

Кашни учитель халиччен мĕн вĕрентнине тепĕр хут аса илтермелли плана пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлет. Вĕренекенсем килте мĕнле вĕреннипе учительсем тăтăшах интересленеççĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе тĕл пулса калаçаççĕ.

Шкулта тухса тăракан стена хаçачĕсем экзамена хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен çутатаççĕ, çак ответлă ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Кăçал VII-мĕш класран пурĕ 41 ача вĕренсе тухмалла. Вĕсем пурте халĕ экзамена тимлĕ хатĕрленеççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ VII-мĕш класран вĕренсе тухсан тĕрлĕ техникумсемпе училищĕсене вĕренме кайма ĕмĕтленет. Юрий Петров речной училищĕне вĕренме каясшăн. Вăл хĕлле-рехех училище дирекцийĕпе çыхăну тытать. Самуил Ванюшкин шахтер, Лариса Тайгильдина учительница, Нина Гусева агроном пуласшăн. Нумайăшĕсем вăтам шкулти VIII-мĕш класа вĕренме кĕме хатĕрленеççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Шупашкарти улттăмĕш шкулти Х-мĕш класра вĕренекенсем аттестат илмелли экзаменсем пама хатĕрленме тытăннă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): О. Охилькова, Н. Алексеева, тата А. Илларионова химипе экзамен пама хатĕрленеççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Историпе СССР Конституцине вĕрентекенсен тивĕçĕ

Пирĕн учительсене идеологи фронтĕнчи пысăк та ответлă ĕçе шанса панă. Вĕсем пирĕн çамрăксене социализмла Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн юратма, Коммунистсен партийĕн ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăма, халăхсен туслăхĕпе пролетарилле интернационализм майлă пулма, государство интересĕсене нимрен малă хуракансем пулма воспитани пама тивĕçлĕ.

«Массăсенче общество умĕнчи тивĕçе тарăн ăнланассине малашне те аталантарса пымалла,—тенĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче,—ĕççыннисене совет патриотизмĕпе халăхсен туслăхĕ майлă воспитани памалла, государство интересĕсемшĕн тăрăшма вĕрентмелле, совет çыннисен чи пахa енĕсене—пирĕн ĕç çĕнтерессе шанса тăрассине, кирек мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерме хатĕр пулассине тата пултарассине вăйлатса пымалла».

Совет çыннисен çак пахa енĕсене аталантарса пырасси идеологилле ĕçри чи пысăк задачăсенчен пĕри. Çакна пурнăçласа пырас ĕçре историпе СССР Конституцине вĕрентекен учительсен ролĕ уйрăмах пысăк. Вĕсен ачасене хăйсем вĕрентекен предметсемпе çирĕп пĕлÿ пама тăрăшас пулать. Шкул ачисем историри паллă ĕçсем, историри деятельсем çинчен, хронологи датисене лайăх пĕлччĕр, историлле событисене тĕрĕс ăнланма тата вĕсем çинчен каласа пама пултарччăр.

Хальхи вĕренÿ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсенче историпе СССР Конституцине вĕрентес ĕç лайăхланса пыни палăрчĕ. И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикла произведенийĕпе тата партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсемпе хĕçпăшалланса, историпе Конституци учителĕсем уроксен идейăпа теори тĕлĕшĕнчи шайне ÿстерчĕç. Вĕсем историри пысăк ыйтусене, авалхи тĕнче историйĕнчен пуçласа СССР историйĕн халичченхи тапхăрĕ таранах, тĕплĕн тата ăнланмалла вĕрентме тытăнчĕç. Чылай шкулсенче историпе СССР Конституцине пур ачасем те лайăх вĕренсе параççĕ. Сăмахран, Ишлей районĕнчи Мамăшпа Тăрăнри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, Муркаш районĕнчи Шурчари, Очăкассинчи, Пашалукассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, Вăрмар районĕнчи Анаткасри, Энтриялĕнчи, Хоруйри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче СССР Конституцийĕпе тата историпе вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймannисем çук. Куславкка районĕнчи Карачри тата Елчĕкри вăтам шкулсенче СССР Конституцине вĕрентес ĕç кирлĕ пек пулса пырать.

Çав вăхăтрах хăшпĕр шкулсенче СССР Конституцине вĕренес енĕпе ĕлкĕрсе пыраймannисем йышлă-ха. Ишлей районĕнчи Чурачăкри тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Иерядоври çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче çак предмета начар пĕлекенсем 17-шер процент шутланаççĕ. Уйрăм шкулсенче СССР историне вĕрентес ĕçре те çитменлĕхсем пур. Чи пысăк çитменлĕх вăл уроксен идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ шайра иртменни пулать. Кунăн чи малтан учительсем айăплă. Вĕсенчен хăшпĕрисем хăйсен ĕçĕн пахалăхĕшĕн ответлăха туймаççĕ, малта пыракан учительсен опытне вĕренсе, çав опытпа усă курмаççĕ, кивĕ методсемпе тата майсемпе ĕçлеççĕ, урока лайăх хатĕрленсе ирттермеççĕ, вĕренÿ материалне тĕплĕн ăнлантарса памаççĕ. Урок пахалăхĕшĕн шкул директорĕсемпе вĕрентÿ пайĕн заведующийĕсем тăрăшма тивĕçлĕ, анчах вĕсенчен хăшпĕрисем истори тата Конституци урокĕсене çÿремеççĕ, учительсен çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсене сиенчех пĕтерме мерăсем йышăнмаççĕ.

Экзамена лайăх хатĕрленсе ирттерес задача асăннă предметсене вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме хушать. Экзаменччен юлнă вăхăтра халиччен мĕн вĕреннине аса илессине, консультацисем, обзорлă лекцисем ирттерессине лайăх йĕркелес пулать. Кая юлакан ачасене кÿллен пулăшса пымалла.

Халиччен вĕреннĕ материалсене аса илтернĕ чухне уйрăм учительсем ик-виçĕ çул хушшинче вĕрентнĕ пĕтĕм материала çĕнĕрен пăхса тухма, билетсем тăрăх ыйтса ачасен пĕлĕвĕсене тĕрĕслеме пикенеççĕ. Çакăн пек туни тĕрĕс мар. Ачасене ик-виçĕ çул каялла вĕрентнисене аса илтернĕ чухне совет науки юлашки çулсенче тунă çитĕнÿсем çинчен каласа кăтартас пулать. Историпе тата Конституцине мĕн вĕреннине аса илнĕ вăхăтра вĕренекенсене партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, çавăнпа пĕрлех тата И. В. Сталин юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенирe мĕн çинчен вĕрентнипе паллаштармалла. СССР Верховнăй Совечĕн кăçалхи мартăн 15-мĕшĕнче пулнă тăваттăмĕш сессийĕнче СССР Конституцине çĕнĕ хушусемпе улшăнусем чылай кĕртнĕ. Вĕренекенсем сесси йышăннă законсемпе постановленисене лайăх пĕлмелле.

VII-мĕш классенчи ачасене вăтам ĕмĕрсенчи историпе халиччен мĕн вĕреннине аса илтернĕ чухне çак темăсем çинче ытларах чарăнса тăмалла: «Хĕвеланăçĕнчи тата Хĕвелтухăçĕнчи Европăра вăтам ĕмĕрсенче хуçалăх мĕнле аталанса пынин тĕп тапхăрĕсем», «Вăтам ĕмĕрсенчи класcен кĕрешĕвĕ», «Вăтам ĕмĕрсенче государствăсен политикăлла стройĕнче пулнă улшăнусем», «Вăтам ĕмĕрсенче пирĕн çĕршыври халăхсем прогрессивлă ĕçсем туни çинчен».

СССР историйĕпе Х-мĕш класра вĕренекенсене çав темăсене тĕплĕн аса илтермелле: «Вырăс хресченĕсен историйĕнчи тĕп тапхăрсем», «Пирĕн çĕршыв авалхи вăхăтсенчен пуçласа хальхи вăхăтчен экономика енĕпе мĕнле аталанса пыни», «Феодалла-крепостникла Россиăри халăхăн массăлла юхăмĕсем», «Вырăс халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăр кĕрешни», «Культурăна аталантарас ĕçре вырăссен революцичченхи культури тата Совет çĕршывĕнчи социализмла культура малта пыни», «Коммунистсен партийĕ—совет халăхĕн граждан вăрçинчи тата Аслă Отечественнăй вăрçăри çĕнтерĕвĕсен организаторĕ» тата ытти темăсене те.

Кашни тема тăрăх иккĕ сехет хушши занятти ирттермелле. Кунсăр пуçне, экзамен тытмалли 44-мĕшпе 45-мĕш билетсенчи пĕрремĕш ыйтусем тăрăх 2—3-шер урок ирттерес пулать. СССР Конституцийĕ тăрăх 2—3 обзорлă лекци ирттернипе çитет. Занятисене ирттернĕ чухне картăсемпе, таблицăсемпе, диаграммăсемпе тата ытти наглядлă пособисемпе усă курмалла.

Экзаменсене лайăх хатĕрленсе ирттернипе вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлесси—совет учителĕсен тивĕçĕ.

Ф. ИВАНОВ,

Учительсен пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн историпе СССР Конституцийĕ кабинечĕн заведующийĕ.

Консультацисене лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ

КАНАШ. Вăтапуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта кăçал 151 ача пĕр класран тепĕр класа куçмалла, 46 ача шкултан вĕренсе тухмалла. Вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлесси чи малтан шкулта вĕрентÿпе воспитани ĕçне мĕнле туса пынинчен, çулталăк хушшинче мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илессине лайăх йĕркеленинчен нумай килет.

Кунта экзамена вĕренÿ çулĕн иккĕмĕш çурçулĕнчех хатĕрленме тытăннă. Çакă вăл пĕтĕм вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма пулăшнă.

Учительсен январьти канашлăвĕнче шкулăн экзаменсене хатĕрленмелли планне сÿтсе явнă. Çав планра программăна пĕтĕмпех пурнăçлассине, мĕн вĕрентнине тепĕр хут аса илтерессине, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасан ачасене пулăшассине тĕп вырăна хунă.

Вĕреннĕ материалсене аса илесси тăваттăмĕш чĕрĕкре вăйланчĕ.

Экзамена хатĕрленес ĕçре консультацисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Консультацисене лайăх хатĕрленсе ирттерни вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймаn ачасене пулăшу памалли чи кирлĕ условисене пулса тăрать. Н. Кречетникова, Н. Никифоров, Л. Карасева, К. Гаврилова, О. Пономарева учительсем консультацисене лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ.

Вĕренекенсене экзамена хатĕрленсе çитме класс руководителĕсем те нумай пулăшаççĕ. М. Дубровина, О. Пономарева, Г. Степанова учительсем хăйсене çирĕплетсе панă классенче вĕренÿ пахалăхне чылай лайăхлатрĕç.

Шкулти комсомол организацийĕ пуçарнипе вĕренекенсем хушшинче пĕр-пĕрне юлташла пулăшассине пур классенче те йĕркеленĕ.

Г. ВАСИЛЬЕВ.

Пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Кунти вăтам шкулăн Х-мĕш класĕнче вĕренекенсем халиччен вĕреннĕ материалсене тепĕр хут аса илеççĕ.

Экзамена хатĕрленнĕ май вĕренекенсем хушшинче пĕр-пĕрне пулăшасси аналлă сарăлчĕ. Ăнланман ыйтусем пулсан, вĕренекенсем çав ыйтусене пĕрле пухăнса пăхса тухаççĕ.

Экзамена хатĕрленнĕ май Х-мĕш класра вĕренекенсем валли вĕрентÿ программипе çыхăннă темăсем тăрăх докладсемпе калаçусем пулаççĕ. Докладсене вĕренекенсем хăйсем туса параççĕ. Юлашки вăхăтра «Совет литератури миршĕн кĕрешес ĕçре», «П. Павленкăн «Счастье» романĕпе унăн пĕлтерĕшĕ», «Карл Маркс — наукăлла коммунизм никĕсне хываканĕ», «Сталин премийĕ илнĕ физиксем», тата ытти темăсемпе докладсем пулчĕç.

Шкул дирекцийĕпе шкулти пуçламăш парторганизаци вĕренекенсене экзамена хатĕрленме нумай пулăшаççĕ. Учительсем вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймannисемпе час-часах уроксем хыççăн занятисем ирттереççĕ, тĕрлĕрен лабораторилле ĕçсем тăваççĕ, йывăртарах задачăсене шутлама вĕрентеççĕ.

А. ИВАНОВ.

Карл Маркс ятне ĕмĕр асăнма

БЕРЛИН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Карл Маркс çуралнăранпа 135 çул тултарнă ятпа унăн ятне ĕмĕр асăнмалла тăвас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме палăртнă.

Правительство йышăннă решени тăрăх, Демократиллĕ Германи Республикинче Карл Маркс орденĕ туса хума йышăннă. Карл Маркс орденне Демократиллĕ Германи Республикинче социализм тăвассишĕн тата никама пăхăнман, пĕрлехлĕ, демократиллĕ, мире юратакан Германи тăвассишĕн политика, экономика, культура енĕпе чаплă ĕçсем тунăшăн уйрăм çынсене, коллективсене, предприятисене тата тĕрлĕ организацисене парса наградăлаççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви çавăн пекех тата Хемниц хулин ятне улăштарса Карл-Маркс-штадт тесе ят пама, Хемниц округне—Карл-Маркс-штадт тесе ят пама йышăннă.

Правительство решенийĕ тăрăх, аслă шкулсенче вĕренекенсем валли Карл Маркс ячĕпе тăракан стипендисем памалла тунă. Карл Маркс ячĕпе тăракан стипендие марксизм-ленинизма вĕренес тĕлĕшпе чаплă çитĕнӳсем тунă студентсене параççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Лейпцигри университета Карл Маркс ятне пама йышăннă. Демократиллĕ Германи Республикин Наука академийĕнче, Берлинри университетра, Иенри университетра Карл Маркс бюстне вырнаçтарса лартма йышăннă.

Шанхайра Карл Маркс çуралнăранпа 135 çул тултарнине палăртаççĕ

ШАНХАЙ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Шанхай хулинчи хаçатсемпе общественность Карл Маркс çуралнăранпа 135 çул тултарнине палăртаççĕ.

«Синьвэньжибао» хаçат паян Карл Маркс пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă статьясем пичетлесе кăларнă.

Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин Шанхайри уйрăмĕн суртĕнче паян Карл Маркс пурнăçĕпе ĕçĕсене сутатса паракан выставка уçăлать.

И. В. Сталин Сочиненийĕсен 11-мĕш томĕ чех чĕлхипе тухнă

ПРАГА, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири политикăлла литература издательстви И. В. Сталин Сочиненийĕсен 11-мĕш томне 120.000 экземпляр чех чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

ТЕКСЕЛ УТРАВĔ ÇИНЧЕ СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕН ПАМЯТНИКНЕ УÇНĂ

ГААГА, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). 1945 çулхи апрель уйăхĕнче Голландири Тексел утравĕ çинче Гитлер лагерĕсенче пулнă совет гражданĕсем гитлеровецсене хирĕç восстани тунă. Çак восстани вăхăтĕнче вĕлернĕ совет гражданĕсен ячĕпе майăн 2-мĕшĕнче памятник уçнă.

Çĕршыва оккупантсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, Голланди халăхĕ совет гражданĕсен ячĕпе памятник лартма ятарласа комитет тунă. Комитет ертсе пынипе кăçалхи май уйăхĕ тĕлне çак памятнике туса пĕтернĕ.

Памятник умне Совет Союзĕн посольстви, бургомистр, памятник лартас тĕлĕшпе ĕçленĕ комитет, Голландири Коммунистсен партийĕ тата вырăнти халăх ячĕпе чечек çыххисем хунă.

Венгрире Государство пухăвĕн суйлавне хатĕрленеççĕ

БУДАПЕШТ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри Халăх Республикинче пур çĕрте те Государство пухăвĕн суйлавĕ умĕнхи митингсем пулса иртеççĕ. Митингсенче Государство пухăвне депутата суйлама тăратнă кандидатсем тухса калаççĕ.

Депутата суйлама тăратнă кандидатсем суйлавçăсене Венгри Халăх Республикинче экономикăпа культура тĕлĕшпе тунă пысăк çитĕнӳсем çинчен каласа параççĕ. 1949 çултан пуçласа 1952 çула çитиччен наци тупăшĕ 25 процент ӳснĕ. Иртнĕ çулта пĕтĕм наци тупăшĕнчен 98 процентне государство секторĕпе обществăлла сектор тата çынсене тара тытса ĕçлеттермен вак хуçалăхсем панă.

Тăватă çул хушшинче рабочисен йышĕ 300 пин çын таран ӳснĕ. Халăх çултан-çул ытларах тавар илет.

Францири муниципалитетсен иккĕмĕш суйлавĕ

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Францири 9 пин çын тата унтан каярах халăх пурăнакан 18 пин коммунăра муниципалитетсен иккĕмĕш суйлавĕ пулса иртнĕ. Иккĕмĕш суйлав апрелĕн 26-мĕшĕнчи суйлавра пĕр парти те ытларахăш сасă илеймен вырăнсенче пулнă. Ку суйлав ытларах сасă илессишĕн партисем пĕр-пĕринпе блок тунипе пулса иртнĕ.

Ĕнерхи суйлавсем Коммунистсен партийĕ халичченхи пекех малти вырăнта пынине кăтартнă. Коммунистсен партийĕ 27 муниципалитетра ытларахăш сасă илме пултарнă.

Коммунистсен партийĕ сĕннĕ тăрăх, чылай çĕрте коммунистсем кандидатсене социалистсемпе пĕрле тăратнă. Çакăн пек тунипе коммунистсемпе социалистсен партийĕ 17 муниципалитетра çĕнтернĕ. Социалистсен партийĕн руководстви хăйĕн пуçламăш организацийĕсене Коммунистсен партийĕн секцийĕсемпе тата ячейкисемпе пĕрле кандидатсем тăратассине хирĕç пулнă. Социалистсен партийĕн Сенăпа Уаза департаментĕнчи федерацийĕн руководстви Коммунистсен партийĕн кандидачĕсемпе союз тăвассине хирĕç ятарласа листовкăсем кăларнă.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, шалти ĕçсен министрĕ Шарль Брюн çапла каланă: Коммунистсен партийĕ малтанхи суйлав вăхăтĕнче сахалтарах сасă илнĕ районсенче те хăшпĕр çитĕнӳсем тунă. Брюн çавăн пекех де Голль партийĕ чылай сасăсем çухатнине палăртнă.

АРГЕНТИНА ВЛАÇĔСЕМ АМЕРИКА ХАÇАТ АГЕНТСТВИСЕН ĔÇНЕ ТĂРĂ ШЫВ ÇИНЕ КĂЛАРАÇÇĔ

ПАРИЖ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина хаçачĕсем малашне Америка агентствисем паракан пĕлтерӳсене хаçатра пичетлес мар тесе йышăннă. Генерал Перон майăн 1-мĕшĕнче Америкăри виçĕ тĕп агентство ĕçне тăрă шыв çине кăларнă. Çав агентствăсем суя хыпарсем сарса пурăннă.

Францири Мир Совечĕн бюровĕ Франци правительствин пуçлăхĕ патне янă çыру

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Францири Мир Совечĕн бюровĕ Франци министрĕсен совечĕн председателĕ Рене Мейер патне çыру янă. Çак çырăва паян «Юманите» хаçатра пичетлесе кăларнă. Çырура çапла каланă: Халăхсен мирне хӳтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕ суйланă комисси мартăн 27-мĕшĕнче Франци правительстви тата ытти правительствăсем патне пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума чĕнсе çыру янă. «Паян,—тенĕ Францири Мир Совечĕн бюровĕн çырăвĕнче,—ытти правительствăсен ответне пичетленĕ кун, Франци халăхĕ хăйĕн правительстви кун пирки мĕншĕн шарламасăр тăнине ăнланмасть. Халăх хăйĕн правительствин шухăшне пĕлесшĕн, правительствăн хăйĕн шухăшне тӳррĕн каласа памалла».

Англи халăхĕ миршĕн кĕрешет

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англири лейбористсен чылай деятелĕсем тухса калани—Англире Корейăри вăрçа чарса лартассишĕн тата Совет Союзĕн мирлĕ сĕнĕвĕсем çине ответ парассишĕн кĕрешни вăйланса пынине кăтартать.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатин членĕ лейборист Десмонд Доннели Диккоте хулинче тухса каланă чухне Гаррисон генерала хăйне Паньмыньчжоньри калаçусенче киревсĕр тыткаланăшăн хытă критикленĕ. Вăл çапла каланă: «генерал Гаррисон хăйне юрăхсăр тыткалани çинчен калакан хыпарсем шухăша яраççĕ: Англи правительствин ăна халех вырăнтан кăларма сĕнмелле мар-ши... Гаррисон хăйне юрăхсăр тыткаланă пирки перемири тăвасси чăрăнса тăнине пула Англин пĕр салтакĕ вилес пулсан та, эпĕ Гаррисона çар трибуналĕн судне памалла тăвассишĕн тăратăп».

Лейбористсен правительствинче çар министрĕ пулнă Стрэчи те Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелемелле тăвассишĕн тухса каланă.

Англипе Египет хушшинче пыракан калаçусем

КАИР, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Египет хушшинче Англи çарĕсене Суэц каналĕн зонинчен илсе каймалла тăвас пирки пыракан калаçусенче нимĕнле улшăну та пулман.

«Аль-Ахрам» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Египет енĕ Англие калаçусен тĕллевĕпе принципĕсем çинчен тĕплĕн каласа пама ыйтать. Акăлчансем ку тĕлĕшпе темиçе проект та тăратнă, анчах та вĕсене Египет енĕ вырăнсăр тесе сире-сире пăрахнă. Египет Англи çарĕсене нимĕн хирĕçмесĕр илсе тухма ыйтать. Вăл: «çак калаçусене вăтам-хĕвелтухăçри оборона системине кĕрес ыйтупа нихăш енчен те çыхăнтармалла мар», тесе калать.

АЛЖИРТЕ ФРАНЦИ ПОЛИЦИЙĔ ИРТĔХЕТ

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци полицийĕ Оран хулинче (Алжир) майăн 3-мĕшĕнче тискер ĕçсем тунă. Полици суйлав участокĕсен çурчĕсене пырса кĕрсе, суйлавçăсене хăваласа кăларнă та суйлав бюллетенĕсене пăтраштарма тытăннă. Çапла вара суйлав результачĕсене Франци влаçĕсене юрăхлă пек кăтартма пăхнă. Çав участоксенче муниципалитета суйлама Алжирти Коммунистсен партийĕпе «Демократиллĕ ирĕклĕхсем çĕнтерĕвĕ» ятлă парти кандидатсене пĕрле тăратнă пулнă.

Полици иртĕхнине хирĕç протестлесе, суйлав участокĕ умне халăх йышлăн пуханнă. Полиципе халăх хушшинче тытăçу пулнă, çĕршер çынна амантнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшмана хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн çыранри артиллерийĕ паян Кириньдо тата Хачирадо утравĕсен районĕнче тăшманăн пĕр эсминецне путарнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласем çине çаплах бомбăсем пăрахать

ПХЕНЬЯН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки кунсенче Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри хуласемпе ялсем çине çĕнĕрен вăйлăн тапăнма пуçланă. Майăн 4-мĕшĕ умĕн çĕрле Пхеньян çине Америка бомбардировщикĕсем нумайăн вĕçсе пынă. Хулари мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине 350 бомба пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем нумай.

Корейăра тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илес пирки

ПЕКИН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ майăн 3-мĕшĕнче Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Паян Корейăпа Китай енĕн тыткăнри аманнă тата чирлĕ çынсен юлашки ушкăнĕ тăван çĕршыва таврăннă. Вĕсенчен 80 çын Китай добровольцĕсем, 105 çын—Корея Халăх çарĕн салтакĕсем. Тăван çĕршыва таврăннă çынсем хушшинче—21 хĕрарăм.

Паян тăван çĕршыва таврăннă Китай добровольцĕсенчен нумайăшне репатриаци тăвас умĕн амантнă. Американецсем апрелĕн 30-мĕшĕнче вĕсем çине наркăмăшлă газсем янă. Çак кун Чечжудо утравĕ çинчи тыткăнри Китай добровольцĕсем лагерьте юлакан хăйсен юлташĕсемпе сывпуллашма Америка влаçĕсенчен ирĕк ыйтма кайма представитель суйланă. Çак представителе американецсем тискеррĕн хĕненĕ.

Кăнтăрла иртсен 14 сехет те 50 минут тĕлне, американецсем тыткăнри çар çыннисем çине наркăмăшлă газ тултарнă гранатăсем виçĕ хутчен пăрахнă. Пурĕ 200 граната ытла пăрахнă. Тыткăнри çар çыннисем чылайăшĕ тăн çухатнă. Тыткăнра çар çыннисем пурăннă чылай палаткăсем çунса пĕтнĕ. Çавăн пекех тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисен тумтирĕсем те çунма пуçланă.

Синьхуа агентстви Корейăпа Китай енĕн тыткăнра пулнă çар çыннисем каласа пани çинчен

ПЕКИН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернинче çапла каланă:

Американецсем апрелĕн 30-мĕшĕнче таварса панă 500 чирлĕ тата аманнă çар çыннисенчен 375 çын Америка енĕ «тытса чарнă граждансем» шутланаççĕ. Çак çынсем каласа панă тăрăх, американецсем вĕсене Ли Сын Ман çарĕнче юлма хĕтĕртнĕ. Американецсем темĕн пек хăратнă пулсан та, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне таврăнма тăрăшнă.

Американецсем тыткăнри çар çыннисем çине пулеметсенчен пенĕ, гранатăсем пăрахнă. Вĕсенчен пĕрне мартăн 27-мĕшĕнче демократилле çамрăксен гимнне юрланăшăн персе амантнă.

Тунисри лару-тăру

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри хаçатсем тата Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тунисра лару-тăру çаплах йывăр-ха. Францин Тунисри генеральнăй резиденчĕ де Отклок Тунис бейне Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо ярса панă послание панă. Çак посланире Тунис хулинчи муниципальнăй советăн вице-председательне Касталлие вĕлернĕ пирки сивлесе калама, халăха муниципалитетсен суйлавне хутшăнма чĕнсе калама хушнă. Франци влаçĕсем хушнипе бей Тунис халăхне чĕнсе каланă. Вăл: «çынсем çине çакăн пек тапăннине сивлес пулать», тенĕ. Анчах, хаçатсем çырнă тăрăх, бей Тунис халăхне суйлава хутшăнма чĕнмен.

Майăн 3-мĕшĕнче пулнă суйлава, тĕрĕссипе илсен, Тунис халăхĕ хутшăнман темелле. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тунисра пурăнакан французсем тата Тунис çыннисем суйлав çине ытла та тимсĕррĕн пăхаççĕ. Тунис хулинче суйлав списокĕсене кĕртнĕ 40 пин çынтан суйлава пурĕ те 3.552 çын (8,83 процент) кăна хутшăннă.

«Юманите» хаçат çырнă тăрăх, политикăлла партисемпе профсоюзсен организацийĕсен арестленĕ деятелĕсене çĕршывăн кăнтăрти Татуин лагерьне ссылкăна янă. Франци влаçĕсем çакăн пек хăтланнине хирĕçлесе, Тунисри нацилле организацисем халăха пĕтĕмĕшле забастовка тума чĕнеççĕ. «Юманите» тата «Либерасьон» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Тунисра арабсен пĕтĕмĕшле забастовки пулнă. Забастовка арестленĕ патриотсене халех ирĕке кăларассишĕн, çĕршыва нациллĕ никама пăхăнманлăх прави парассишĕн кĕрешес тĕллевпе иртнĕ. Хулара пур лавккасемпе магазинсем те хупă тăраççĕ. Забастовкăна ремесленниксем, сутуçăсем, студентсем активлă хутшăннă.

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРЕ ÇАР ХАТĔРĔСЕМ НУМАЙ ПУХСА ХУНĂ

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильри радио пĕлтернĕ тăрăх, Рейн юханшывĕнчен хĕвеланăçнерехри пысăк складсенче çар хатĕрĕсем нумай хатĕрлесе хунă. Вĕсене Германи çарĕ валли хатĕрлеççĕ. Ку çар Европа çарне кĕмелле. Германи çарĕнче 1.350 самолет, 1.800 танк пулмалла. Германи çарне хĕçпăшалламарма 40 миллиард марка расходлама палăртнă. Самолетсемпе танксене США-ран илсе килеççĕ.

ПАТЕТ-ЛАОРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Патет-Лаори ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕн чаçĕсем ĕнер Нам-Ху юханшывĕ хĕрринчи Пак-Ху посчĕ тата Нам-Хуонг юханшывĕ хĕрринчи Пак-Суонг посчĕ патне çывхарса çитнĕ. Çак постсем Луан-Прабан патне пымалли çула пӳлеççĕ.

Çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн

Тарасасем юсакан завод производство планне кашни уйăхрах иртерсе тултарать. Пĕррĕмĕш кварталти плана завод 124 процент тултарнă, иртнĕ çулхи çав вăхăтпа танлаштарсан ĕç тухăçлăхне 38 процент ӳстернĕ.

Заводри кашни рабочи, бригадăпа бригада, цехпа цех ăмăртса ĕçлеççĕ. Рабочисен 55 проценчĕ—стахановецсем.

Май уявĕ умĕнхи вахтăна тăрса, завод коллективĕ пысăк çитĕнӳ турĕ. Социализмла ăмăртура штамповочнăй цех, Улатăрти куçса çӳрекен мастерской мала тухнă. Вĕсем туса кăларнă продукцие чи лайăх продукци тесе йышăнаççĕ. Н. Васин, А. Леонтьев, А. Мозолев, И. Виноградов, В. Фадеев рабочисем халĕ август е сентябрь уйăхĕ шучĕпе продукци туса кăлараççĕ. Заводри чылай рабочисем май уйăхĕнчи производство планне тултарнă, июнь уйăхĕ шучĕпе ĕçлеççĕ.

Кăçал кунта тарасасем, электроприборсем тата тĕрлĕ йышши приборсем юсанисĕр пуçне, çĕнĕ япаласем туса кăларма е юсама пуçланă. Республикăри колхозсем валли 310 кормозапарник тунă.

Нумаях пулмасть заводра шыв флочĕ валли 15.301 метр сăнчăр туса кăларнă, двигательсем, пĕчĕк электроприборсем юсама тытăннă. Завод коллективĕ çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Г. МАЛЬЦЕВ.

Хыр лартрĕç

КАЛИНИНО. Вăрнар вăрман хуçалăхĕн Калинино лесничествине кĕрекен пĕррĕмĕш обход çĕр гектар çинче вăрман ӳстерет.

Вăрман хĕррипе хăйăрлă çерем тăрăхĕ нимĕн усăсăр выртнă. Кунта хыт-хурасăр пуçне нимĕн те ӳсмен.

1949 çулта çак вăрман хĕррипе пилĕк гектар çине 50 пин тĕп хыр йывăççи лартса хăварчĕç. Лартнă йывăççем лайăх та тĕрĕс-тĕкел ӳсеççĕ. Вĕсем пĕр метр çӳллĕш ӳсрĕç ĕнтĕ. Темиçе çул каярах усăсăр выртнă хăйăр çинче халĕ этем лартса тунă сип-симĕс çамрăк хыр вăрманĕ ӳссе ларчĕ.

Кăçал кунта тата сакăр гектар çине 80 пин тĕп хыр лартса хăварчĕç.

В. МИХАЙЛОВ.

Çĕнĕ çуртсем лартаççĕ

ЭЛĔК. Пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн «Самолет» ялхуçалăх артелĕнче çĕнĕ çуртсем лартас тата киввисене юсас ĕç анлăн саралчĕ. Иртнĕ çулта М. Семенов юлташ ертсе пыракан строительство бригади урапа-çуна лартмалли сарай, лаша вити туса пĕтерчĕ. Я. Петров юлташ бригади ĕне витине, ферма çуртне тата пĕр кормокухня юсарĕ.

Колхозра строительство енĕпе кăçал татах та пысăкрах ĕçсем тума палăртнă. Автомашина валли гараж, 150 пуç сысна вырнаçмалăх вите, сурăх вити тата самаран пăру вити тумалла. Çак ĕçсене тума 20 çынтан строительство бригади организациленĕ. Унăн бригадирĕ пулма И. Никифоров платника çирĕплетнĕ.

Бригада çак кунсенче гараж тума тытăнчĕ.

И. ЯКОВЛЕВ.

ПĔЛТЕРНИ

Майăн 6-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека суртĕнче, докладчиксемпе агитаторсем валли инструктивлă доклад пулать. Тема: «Майăн 9-мĕшĕ—совет халăхĕ Германи фашизмне çĕнтернине уявламалли кун».

Докладчик—И. М. Васькин юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Критикăпа библиографи

„Зойăпа Шура çинчен“

Пирĕн çĕршывра Зоя Космодемьянская ятне пĕлмен çын çук. Зоя ячĕ халăхра пурăнать, телейлĕ пурнăçшăн кĕрешме чĕнет, тăшмансене курайми пулма вĕрентет.

«Зойăпа Шура çинчен»*) çырнă кĕнеке вулакансене икĕ геройăн—аппăшĕпе шăллĕн пурнăçĕпе паллаштарать, вĕсем çемьере мĕнле ӳснине, характерĕсем мĕнле йĕркеленсе çирĕпленнине кăтартса парать. Ку кĕнекене вăтам тата аслă çулхи ачасем валли çырнă, анчах вăл ача аппăшĕ-амăшĕсемпĕн те çав тери паха та усăллă кĕнеке. Ăна вуласа тухатăн та тарăн шухăша путатăн. Кĕнеке ачасене таса та тӳрĕ, çирĕп чĕреллĕ, пурнăça, халăха, Тăван çĕршыва пысăк туйăмпа юратакан патриотсем пулма воспитани пама вĕрентет.

Зойăпа Шура туслă çемьере, пĕр-пĕрне кăмăллăн килĕштерсе пурăнакан çемьере ӳснĕ. Аслисем пĕр-пĕринпе кăмăллă пулни ачасене те çавăн пек пулма, çынна хисеплеме вĕрентнĕ. Аслисем хăйсен ĕçне юратса, чĕререн парăнса туни ачасене те çын ĕçне хаклама вĕрентнĕ. Анатолий Петровичпа Любовь Тимофеевна ачасене воспитани парас ĕçе пысăк та ответлă ĕç тесе шутланă, вĕсем хăйсем те лайăх воспитательсем пулнă. Зойăпа Шурăшăн уйрăмах Мавра Михайловнăн (кукамăшĕн) сăнарĕ кăтартуллă пулнă. Мавра Михайловна, хăйĕн çамрăк ĕмĕрне йывăр саманара пурăнса ирттернĕскер, çырма та вулама та пĕлмен, анчах чĕрипе вăл талантлă педагог пулнă.

Зойăн характерĕ пĕчĕклех лайăх палăрнă. Вăл çивĕч те йăрă, çăмăл кĕлеткеллĕ хĕрача пулнă, çаран çинче сехечĕ-сехечĕпе лĕпĕшсем хыççăн чупнă, чечексем пухнă, шыва кĕме çӳренĕ. «Пилĕк çулта чухнех, хăй кĕпине çуса типĕтсе, киле таса таврăнатчĕ» — тет Зоя çинчен унăн амăшĕ. Зоя пĕчĕклех тĕрĕслĕхе юратнă, тӳрĕ чĕреллĕ пулма тăрăшнă, кам та пулин тĕрĕс мар калать пулсан е хăй йăнăшне йышăнмасть пулсан, Зоя ун пек çынсемпе килĕшме пултарайман.

«Пĕррехинче эпир Анатолий Петровичпа ман атте-аннесем патне хăнана кайрăмăр. Хамăрпа пĕрле ачасене те илтĕмĕр. Пырса кĕрсенех ман атте, Тимофей Семенович, Зойăна çапла каларĕ:

— Эсĕ мĕншĕн суйрăн-ха мана ĕнер?

— Мĕн суйнă?

— Эпĕ санран, ман куçлăха ăçта хутăн, терĕм те, эсĕ «пĕлместĕп», терĕн. Кайран вара ăна эпĕ тенкел айĕнчен тупрăм, никам та мар, эсĕ пăрахнă ăна тенкел айне.

Зоя кукашшĕне куç айĕпе пăхса илчĕ те пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Кăшт тăрсан, пире сĕтел хушшине ларма чĕнчĕç. Зоя лармарĕ.

— Каланине ĕненмеççĕ пулсан, эпĕ сĕтел хушшине лармастăп,—терĕ вăл.

— Ну, мĕн вара иртнĕ япалашăн çиленетĕн? Ларах, лар.

— Çук, лармастăп.

Чăнах та лармарĕ».

Шкулта вĕреннĕ чухне те Зоя яланах примерлă хĕрача пулнă. Пур предметсемпе те тăрăшса вĕреннĕ, нихçан та пĕр хăйшĕн кăна тăрăшман, хăйне яланах коллективпа пĕрле тытнă, уншăн тăрăшнă.

Илемлĕ литература вулани, Пушкин, Чернышевский, Герцен, Маяковский, Н. Островский, Гайдар творчествипе паллашни Зойăна пурнăçа тата тарăнрах ăнланса илме пулăшнă, тăшмансене курайми пулма вĕрентнĕ. Халăх тăшманĕсем Сергей Миронович Кирова вĕлерни Зойăна çав тери хурлантарнă. Çакăн чухне ĕнтĕ вăл Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешекенсен ретне тăрас ĕмĕтпе пионера кĕрет.

Повĕçре Аслă Отечественнăй вăрçă мĕнле пуçланни çинчен калакан сыпăксене ниепле те хумханмасăр вулама çук.

Тăван çĕршывшăн пысăк йывăрлăх килсе тухнă самантра кашни çыннăн мĕн тумаллине комсомолецсем тĕрĕс ăнланса илеççĕ. Вĕсен пурин те пĕр ĕмĕт-шухăш—тăшмансене хăвăртрах çапса аркатмалла, Тăван çĕршыва пĕтĕм хăватпа пулăшмалла. Акă Зойăпа Шура фронта кайнă рабочисем вырăнне завода ĕçлеме кĕреççĕ. Анчах та Зойăшăн заводра ĕçлени çителĕксĕр пек туйăнать, унăн алла хĕçпăшал тытса тăшманпа хире-хирĕç тăрса çапăçас килет. Зоя комсомолăн Мускав хула комитечĕн секретарĕ патне пырать, хăйне фронта, тăшман тылне ăсатма ыйтать. Ăна шанаççĕ... Вара вăл, тăван Мускавпа сывпуллашса, тăшмана тавăрма тухса каять. Тăван çĕршыва, халăха, пурнăça юратни Зойăна чĕрĕ вăй парать, йывăрлăхсене çĕнтерме хавхалантарать. Вилĕм аллине лексен те вăл пурне те тӳсĕмлĕн чăтса ирттерет, вилĕмпе куçа куçăн тăрсан та тăшманран каçару ыйтмасть, паттăррăн пуçне хурать.

Чăваш государство издательстви «Зойăпа Шура çинчен» çырнă повĕçе чăвашла куçарса кăларни питех те пархатарлă ĕç. Вулакансем ăна хапăлласах йышăнаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, повĕçе ăнланмалла, çăмăл чĕлхепе куçарнă. Анчах та кĕнекен паха енĕсене кăтартса хăварнипе пĕрлех кĕнекери çитменлĕхсем çинчен те асăнмасăр иртсе кайма çук.

Тӳрех калас пулать, кĕнекене питех те начар редакциленĕ, стилистика, пунктуаци, орфографи йăнăшĕсен шучĕ те çук кунта. Грамматикăна хисепе хуманнине пула, кĕнекере чылай çĕрте стиль пăсăлнă, автор калас тенĕ шухăша чăваш вулаканĕ патне тĕрĕс илсе çитереймен.

«Унтанпа хĕрĕх çул иртнĕ пулсан та çав вăхăта эпĕ вак-тĕвекĕсем таранах, (?) ĕнер пулса иртнĕ пек астăватăп». Вырăсла ăна çапла каланă: «Почти сорок лет прошло с тех пор, но я помню все до мелочей, словно это было вчера». Вырăсла текстра «словно» умĕн запятой лартнă. Анчах чăвашла текстра «таранах» сăмах хыççăн запятой лартма нимĕнле сăлтав та çук, ăна вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсене пĕлменнине пула çеç лартса янă.

«То ли дело старые приятели: мишка-лакомка, Лиса Патрикеевна, простофиля-волк, польстившийся на рыбу и оставивший полхвоста в проруби, и другие старые знакомцы из русских народных сказок», тенине чăвашла çапла пăсаласа куçарнă: «Вĕсем чылайранпа хăйсем пĕлекен пылак çиме юратакан упа, Тилĕ Патриеевна, пулă тытма хăтланса, хӳрине вакра пăрлантарса хăварнă айван кашкăр, тата вырăс халăхĕн ытти юмахĕсем пулсан, каçса кайсах итлемелле». Паллах, кунта стиль пăсăлнă, вырăсла оригинала вуласа тухмасăр ку предложение ниепле те ăнланса илме çук.

«Зоя выслушала меня молча, но потом, уже после ужина, вдруг сказала...» (57 стр.). Ку предложение чăвашла куçармасăрах хăварнă.

«... иккĕмĕш ушкăн мягкий знакпа пĕтекен япала ячĕсене тупса çырать». «Мягкий знак» чăвашла «çемçетекен паллă» пулать, анчах темшĕн куçаракан та редактор ăна чăвашла куçарма хăранă.

Пĕр формăра тăракан сăмаха икĕ тĕрлĕ çырни те пур. Сăмахран, хыççăмахра çапла каланă: «Зоăпа Шура çинчен» çырнă кĕнекене чăвашла пичетлесе кăлартăмăр». Тепĕр виçĕ йĕрке урлă эпир çакна вулатпăр; «Зойăпа Шура Космодемьянскисем фашистсемпе кĕрешсе хăйсен пурнăçне панă».

Пирĕн куçаракансемпе редакторсен хăйсен ответлăхне ӳстермелле. Куçарнă кĕнекере автор шухăшĕ, стильпе чĕлхе уйрăмлăхĕ—пурте сыхланса юлмалла. Куçарнă тени пĕр предложенире те ан сисĕнтĕр, куçарнă кĕнеке чăн-чăн чăвашла произведени пек вулантăр. Çавăн чухне тин вăл вулакансен кăмăлне çырлахтарма пултарать.

Н. ПЕТРОВ.

*) А. Космодемьянская. Зойăпа Шура çинчен. Повесть. М. Ильин (М. Хури) куçарнă. Редакторĕ М. Рубцов. Чăвашгосиздат, 1952. Хакĕ 3 т. 50 пус.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче Чехословакире ӳкернĕ

„ЗАВТРА БУДУТ ТАНЦЕВАТЬ ВСЮДУ“

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Сценари авторĕсем — В. Влчек, Б. Шохова, П. Когоут.
Композитор — Л. Подэшть.
Сасă операторĕсем — Ф. Черный, И. Завадил.
Ташлакансемпе юрлакансем:
Чехословакири çамрăксен союзĕн Прагăри ташă ансамблĕ, Чехословакири çамрăксен союзĕн Брно хулинчи халăх юррисемпе ташшисен ансамблĕ, Прагăри «Ауто» заводри Ю. Фучик ячĕпе тăракан ансамбль тата ыттисем те.
Фильма Чехословаки государствин Прагăри киностудийĕ ӳкернĕ, 1952 çул.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—вырăсла спектакльсем: майăн 6-мĕшĕнче «Твое личное дело», майăн 7-мĕшĕнче «Богатырский сказ». Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—майăн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль «Весна в Москве». Сеанссем 12, 14, 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01118 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.